Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

1937 октябӗр 4 тунтикун 228 (4740)-мӗш №

Пӗр №-рӗ 10 пус

19-мӗш ҫул тухать

Чӑваш Коммунӗ

ПСК(б)П Чӑваш Обкомӗпе Тӗпӗҫтӑвкомӗн хаҫачӗ

Редакципе кантур адресӗ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторӑн 0—67; Ред. заместителӗн 0—88; Дежурнӑйӑн 6—23

Массӑсен ӳссе пыракан политикӑла хастарлӑхӗн пуҫӗнче пулмала

Пирӗн ҫӗршыв уйрӑмах вӑйлӑ политикӑла ҫӗкленӳ тапхӑрӗнче тӑрать. Вӑл пур ҫӗрте те, аслӑ ҫӗршывӑн пур кӗтессисенче те сисӗнет, вӑл мӗлйунщар, вуншар мӗлйун ҫынсене йарса илет. Хӑйсен кулҗтурлӑхӗ вӑйсӑртарах пулнӑ пирки политикӑран пӗртак айккинерех тӑнӑ пек пулнӑ ҫынсем те халӗ, пайан, обшчӗствӑн активлӑ пурнӑҫне хутшӑнма майсем шыраҫҫӗ. Рабочисен, колхозникксен, интеллигенцин политикӑла хастарлӑхне нихҫан пулман таран ҫӳлӗ вырӑна хӑпартакан сӑлтавсем иккӗ: социалисӑмла Аслӑ револҗуци пулни ҫирӗм ҫул тултарни тата ССРС Аслӑ Советне суйлама хатӗрленни.

Пирӗн ҫӗршыв Ленин—Сталин парти йертсе пынипе иртнӗ ҫирӗм ҫул хушшинче пӗтӗм тӗнчипе историлӗ ҫӗнтерӳ тунипе анчах, Совет Сойузӗнче социалисӑм чаплӑн малала пынипе анчах епӗр тӗнчери чи демократилӗ Конституци йышӑнса ҫирӗплетме пултарнине ӑнланакан совет гражданинӗн ӑстӑнӗнче ҫак икӗ событи те—социалисӑмла Аслӑ револҗуцин ҫирӗмӗш уйавӗ те, ССРС Аслӑ Совечӗн суйлавӗ те пӗр-пӗринпе уйрӑлми ҫыхӑнса тӑракан ӗҫсем вырӑнче тӑраҫҫӗ.

Пирӗн ҫӗршыв ҫыннисем, капиталисӑм тӗнчинчен ирӗклӗ, совет, социалисӑм тӗнчине ҫитсе ҫитнӗ хыҫҫӑн кусннисем те, чӑтма ҫук асаплӑ, хӗнхурлӑ, тертлӗ, пусмӑрлӑ, чухӑн пурнӑҫ ҫинчен кӗнекесемпе хаҫатсем ҫинче ҫырнисем, ваттисем каласа панисем тӑрӑх анчах пӗлекенннисем те,—пурте вӗсем, утса тухнӑ ҫирӗм ҫул ҫине кайала ҫаврӑнса пӑхса саврӑнаҫҫӗ, камӑлӗсем ҫӗкленеҫҫӗ вӗсен. Вӗсем ӗҫлес, тӑвас тесе хыпса ҫунаҫҫӗ, вӗсем тӑван ҫӗршыв валҗли ытларах та нумайрах ӗҫлес тесе хыпса ҫунаҫҫӗ, вӗсем хӑйсен тӑван ҫӗршывне тата ытларах вӑйхӑватлӑ, никам ҫӗнтерейми ҫӗршыв тӑвасшӑн.

Массӑсен политикӑлӑ хастарлӑхне нихҫан пулман таран вӑйлатса йама май панӑ сӑлтавсем хушшинче—ҫӗнӗ суйлав саккунне пӗтӗм халӑх вӗренни, ун ҫинчен вӗрентни хӑйне уйрӑм вырӑн йышӑнса тӑрать. „ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали Положенин“ хӑвачӗ акӑ мӗнре—вӑл пӗтӗмпех ССРС Конституцинчен ҫуралса тухнӑ.

Ҫӗнӗ суйлав саккунӗ, Сталинла Конституци пекех, кашни тӳрӗ кӑмӑллӑ, суйлав саккунӗ ҫинчен тарӑнӑн шутлакан ҫынна патшалӑх строительствине хастарлӑнтарах хутшӑнма хавхалантарать. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ ҫӗнӗ суйлав саккунне вӗренме вуншар пин кружоксем туса пӗтернӗ. Ку кружоксем йалан пек мар: вӗсем урлӑ мӗлйуншар совет ҫыннисем политикӑ ӗҫне хутшӑнаҫҫӗ, вӗсенче советӑн пулас активисӗсем, социалисӑм агитаторӗсем, пропагандисӗсем ӳсеҫҫӗ. Ҫӗнӗ суйлав саккунӗн никам ҫӗнтермеле мар вӑйӗ тата—вӑл, саккун, тӗнчери ларутӑрупа хамӑр ҫӗршыври политикӑлӑ пысӑк ыйтусем пирки ӗҫҫыннисен кайа йулнӑ сийӗсене те пысӑккӑн интереслентерме пуҫланинче пулать. Ҫапла ӗнтӗ, „ССР Сойузӗн Аслӑ Советне суйламали Положенине“ савӑтсенче, хапрӑксенче, колхозсемпе совхозсенче, красноармейцӑсен часӗсенче, учрежденисенче вӗрентни—пӗтӗм халӑхӑн, нумай мӗлйунлӑ халӑхӑн политикӑ университечӗ пулса тӑрать, массӑсен политикӑлӑ ӑнланӑвне пӗрмайах малала ҫӗклентерсе пыракан вӑйлӑ рычаг пулса тӑрать.

Суйлав саккунне ӑнлантарас ӗҫ Горики облаҫӗнче мӗнле пыни ҫинчен калакан материалсем, ку ӗҫ ахалҗ ӗҫ мар, питӗ пысӑк ӗҫ пулнине кӑтартаҫҫӗ. Хулара ҫеҫ мар, йалта та, суйлав саккунӗн кашни параграфне тӗплӗн ӑнлантараймасан, пуш сӑмах анчах ҫаптаракан, кулленхи политикӑлӑ ҫивӗч ыйтусем патӗнчен иртсе кайакан агитаторпа пропагандисӑн сӑмахне никам та итлемест. Ӗҫҫыннисем суйлав саккунне йӳратса вӗренеҫҫӗ, вӗсем тӗнчери лару-тӑрупа ҫӗршыври политикӑ пурнӑҫӗн чи пысӑк ыйтӑвӗсене кӑларса тӑратаҫҫӗ, ответ пама ыйтаҫҫӗ. Ӑнланман ыйтусене ӑнлантармала, пӑтранчӑк, тӗрӗс маррисене сивлемеле, тӑшманла тухса каланисене отпор памала. Халӗ, пӗтӗм ҫӗршыв пирӗнрен тӗмӗн чухлӗ агитаторсем, пропагандиссем ыйтнӑ чухне, коммуниссемпе комсомолӗссем, партире тӑман активиссем нумай мӗлйунлӑ халӑх хушшинче болҗшевикла сӑмах илсе пынӑ чухне, пирӗн чи кирлӗ, анчах та болҗшевиксемшӗн питӗ хаклӑ ӗҫсем ҫинчен, ленинла-сталинла агитаци традицийӗсем ҫинчен, татах та татах аса илтермеле.

Политикӑла активлӑх уйрӑмах вӑйлӑн ӳсни предприйатисемпе колхозсенче ҫеҫ мар, ҫавӑн пекех ку таранччен сахал активлисен шутне кӗртнӗ кустарсем, килте ӗҫлекен хӗрарӑмсем, пенсионерсем хушшинче те палӑрать. Ҫак ҫынсен пухӑвӗсем лит те пысӑк йышлӑн тата активлӑн иртеҫҫӗ. Ҫак ҫынсем пурте хӑйсен правине туйса илчӗҫ, ӑна ӗҫре пурнӑҫа кӗртессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Сталинла Конституци ҫак ҫынсене те ССР Сойузӗн ытти гражданӗсемпе пӗртан права пачӗ.

Хуларипе йалти ӗҫҫыннисен политикӑла активлӑхӗ ӳсни—пурнӑҫӑн пур йенӗнче те ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем патне илсе пырать. Ку вӑл пирӗн ӳсӗмӗн ҫирӗп саккунӗ пулса тӑрӗ. Стаханӑвла йухӑм халӗ ҫӗнӗрен ҫӗкленни ӑнсӑртран пулнӑ ӗҫ мар. Мускав, Ленинград, Горики пек промышлӗннӑҫлӑ ытти центрсенчи ӗҫҫыннисем, чукун ҫул ҫинче ӗҫлекенсем, кулҗтурӑпа искусствӑ работникӗсем социалисӑмла Аслӑ револҗуцин XX ҫулхи уйавне стаханӑвла кӗтсе илме хатӗрленеҫҫӗ.

Кӑҫалхи питӗ вӑйлӑ тырпула халӑх тивӗҫлипе сталинла тырпул тесе йат парать. Совет йалӗ пуйан пурнӑҫ ҫулӗ ҫинче тунӑ ҫитӗнӳсем—мӗлйунлӑ колхозникксемпе колхозницӑсен политикӑла ӑнланӑвӗ пӗрмай ӳссе пынин резулҗтачӗ. Халӗ те йалта, кӗрхи пысӑк ӗҫсем—кӗрхи ака, кӗрхи ҫӗртме тӑвасси пынӑ чухне, Октябӗр уйӑвӗнхи ӑмӑрту анлӑн саралса пырать. Ку вӑл йалти ӗҫҫыннисен политикӑлӑ ӑнланӑвӗ ҫӳлте тӑнине кӑтартать. Йалти ӗҫҫыннисем рабочи класпа пӗрле, вӑл йертсе пынипе, социалисӑмла Аслӑ револҗуцин XX ҫулхи уйавне тата ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн ҫитес суйлавне ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тунипе кӗтсе илме тӑрӑшать.

— Епӗр ССР Сойузӗн Аслӑ Совечӗн суйлавне шутсӑр хытӑ кӗтетпӗр,—тесе ҫыраҫҫӗ Кийӗв облаҫӗнчи, Ваҫилковски районӗнчи Йацки йалӗнчи колхозникксем.

— Епӗр суйлава организацилӗ кайатпӑр, хамӑрӑн сасӑсене чи лайӑх ӗҫлекен болҗшевиксене парса, епӗр хамӑр коммуниссен партине йӳратнине, унӑн ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫленине тата тепӗр хут кӑтартӑпӑр.

Ленин—Сталин парти тата Совет правителствви ӗҫӗшӗн чӗререн тӑрӑшса ӗҫлекен колхоз хресченӗсемпе пӗтӗм ӗҫҫыннисен кӑмӑлӗ ҫапла.

Ӗҫҫыннисен политикӑла ӑнланӑвӗ ӳсни —чӑн-чӑн активлӑ сыхӑлӑхра, рабочисем, колхозниксем, специалиссем шпионсене, диверсантсене, фашисӑм разведчикӗсене тымарӑпе кӑклама, пӗтерме Сталинла Тӗп Комитетпа совет правителствине активлӑн пулӑшнинче лайӑх курӑнать. Кунта чи хисеплӗ постсене пирӗн чикӗсен мухтавлӑ часовойӗсем—пограничникксем, Рабочисемпе Хресченсен Хӗрлӗ Ҫарӗн красноармейцисемпе командирӗсем йышӑнса тӑраҫҫӗ. Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн Гродековӑри Л. М. Каганович йачӗпе тӑракан отрйад социалисӑмла Аслӑ револҗуцин ҫирӗм ҫулхи уйавӗнче сталинла вахтӑра пулма права илессишӗн кӗрешме чӗнни чикӗ хӗрринчи пур заставӑсем тӑрӑх саралса карӗ.

Пирӗн ҫӗршывра пур ҫӗрте те ҫӗкленнӗ политикӑла активлӑха йертсе пырасси, ӗҫҫыннисен вӑйне, пуҫарӑвне чи кирлӗ тӗллеве, усӑлӑ ҫӗре йарасси, совет гражданинӗн кашнин ӗмӗчӗ економикӑлӑ тата политикӑлӑ усӑ памала тӑвасси — акӑ ӗнтӗ ҫакӑ пайанхи пӑттӑр задачӑ. Пайан, Аслӑ Совет суйлавне пур ҫӗрте хатӗрленнӗ условире, совет влаҫӗ пуҫланни ҫирӗм ҫул тултарнине хатӗрленекен условире кашни коммунисӑн, кашни комсомолӗсӑн, кашни активисӑн ролӗ уйрӑмах ӳсет. Вӗсен организацилӗ пултарулӑхӗ, массӑсене йертсе пыма пултарнин искусстви ӗҫре тӗрӗсленет.

(„Правда“).

ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗн постановленийӗ

ССР Сойузӗн тата сойузлӑ республикӑсен законодателстви тӑрӑх шпионажпа, сӑтӑрлӑхпа, ҫынсене вӗлерсе взрывсем, крушенисем тӑвассине, вут хыптарассине организацилеме хӑтланнисемпе т. ыт. диверсилӗ актсемпе кӗрешме уголовни наказани йӗркипе—вунӑ ҫуллӑхран ытлана мар хупса лартмала, тата патшалӑха хирӗҫ чи йӑвӑр преступлени тунисене—чи пысӑк наказани памала (персе пӑрахмала).

Ҫавӑн йышши преступленисемпе малала кӗрешсе пыма тата суда—ҫавӑн пек преступленисемшӗн чи пысӑк наказани (персе пӑрахасси) ҫеҫ мар, вӑрӑмрах срукла хупса лартассине те суйласа илме май пама, ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗ ҫапла йышӑнать:

1. „Основные начала уголовного законодательства СССР и союзных республик“ 18-мӗш статйине улӑштарса, уголовни наказани йӗркипе ҫирӗм пилӗк ҫуллӑхран ытлана мар хупса лартмала тӑвас.

2. Сойузлӑ республикӑсен Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитечӗсене хӑйсен законодателствине ҫак постановленипе килӗшӳлӗ тума хушас.

ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет председателӗ—**М. Калинин.**

ССР Сойузӗн Ӗҫтӑвакан Тӗп Комитет секретарӗ—**А. Горкин.**

Мускав, Кремлҗ.
1937 ҫул, октябӗрӗн 2-мӗшӗ.

Социалисӑмла Аслӑ револҗуци пулни 20 ҫул тултарас умӗн.
ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: В. И. Ленин 1920 ҫ. майӑн 1-мӗшӗнче пулса иртнӗ Кремлри субботникре. (ССРС револҗуци музейӗ)

(Сойузфото)

Мускав—Ҫурҫӗр Америкӑ вӗҫевне иртерекен Правителствӑ Комиҫҫийӗнчен

Совет правителстви Леваневски йулташӑн „Н 209“ самолҗотне шырама нумай самолҗотсем йачӗ. Анчах, ҫанталӑк условийӗсем пит йапӑх пулнипе, полҗус районӗнче, „Н-209“ самолҗот унта ларнӑ тесе шутламала вырӑнта (полҗуспа широтан 87 градус хушшинче, Америкӑ йенӗ), халиччене вӗсме май килмен. Ҫурҫӗрте ҫӗрле пуличчен Пӑрлӑ океанӑн Америкӑ йенне ҫеҫ, широтан 85 градусӗ таран, Леваневски йулташ маршручӗ тӑрӑх, урӑхла каласан 148 меридиан патӗнче, шыраса пӑхма май килнӗ. Совет правителстви туйаннӑ гидроплан ҫинче ҫурҫӗр тӗпчевҫи Г. Вилкинс темиҫе хут ӑнӑҫлӑ вӗҫевсем тунӑ. Грациански йулташ та темиҫе хут вӗҫне, Задков тата Матерн—пӗрер хут вӗҫнӗ. Хӗлле пулсан, самолҗот тӑмали вырӑнсем шанса ларсан Г. Вилкинс самолҗотне чӗнсе илнӗ. Головин йулташӑн ҫул ҫинче пулнӑ резерври самолҗотне те ҫав сӑлтавпах чӗнсе илнӗ. Грациански самолҗочӗ (вӑл амфиби, урӑхла каласан урапалӑ лодкӑ) вӑрӑмрах вӑхӑт хушши вӗҫме пултарнӑ, анчах унӑн та вӑхӑчӗ иртсе пырать.

Ҫапла пулин те, Леваневски йулташ самолҗотне шырас ӗҫ малала пырать. Халҗ Рудолҗф утравӗнче тӑракан, Шевелҗов тата Водопйанӑв йулташсем йертсе пыракан тӑватӑ йӑвӑр самолҗотсем патне хушса, правителствӑ ҫавӑн пек тӑватӑ моторлӑ ҫӗрле вӗҫме майлаштарнӑ самолҗотсем тата тӑваттӑ йама йышӑнчӗ. Отрйад хатӗрленсе ҫитнӗ. Чухновски йулташ йертсе пыракан отрйад ҫывӑхри кунсенчех Мускавран вӗҫсе тухать.

Кашни самолҗот ҫинчех икӗ пилот. Вӗсенчен пӗри полҗар лҗотчикӗ, вӑлах карап командирӗ, вӗсем: Чухновски, Бабушкин, Фарих, Мошковски йулташсем. Тепӗр пилочӗ—ҫӗрле вӗҫекен паллӑ специалис (ҫар лҗотчикӗсем), вӗсем: Лисицын, Цыганов, Пусеп, Глушченко йулташсем, флагштурмӑн—Шелыганӑв йулташ. Ку отрйадпах тата лҗотчик Пивенштейн йулташ, аслӑ инженер Стоман йулташ, синоптик Клҗомин йулташ тата ыттисем те кайаҫҫӗ.

Америкӑ йенчен шырас ӗҫе те малала туса пыраҫҫӗ. Правителствӑ Америкӑра йӗлтӗрлӗ пысӑк самолҗот туйанмала тунӑ. Г. Вилкинс хӑйӗн екипажӗпе ку самолҗот ҫинче вӗҫме килӗшнӗ.

Тӗп йенче—Рудолҗф утравӗ ҫинчен—ҫурҫӗр каҫӗ условийӗнче вӗҫеҫҫӗ. Уйӑх курӑннӑ чухне ҫеҫ вӗсме ҫителӗклӗ курӑнма пултарать. Комиссӣ Шевелҗов йулташа таврара ҫителӗклӗ курӑннӑ чухне ҫеҫ вӗҫме ирӗк пама кӑтарту панӑ.

Тӑватӑ моторлӑ самолҗотсемсӗр пуҫне, вӗсем пурӗ ӗнтӗ саккӑр пулаҫҫӗ, Рудолҗф утравӗ ҫине тата „П-5“ самолҗотсем иккӗ (кусем ҫине груз тийемели, пассажирсем лартмали Гроховски йулташ системилӗ кассетӑсем лартнӑ) тата виҫӗ сӑмӑл самолҗот—ҫанталӑка разведкӑ тума тата ҫыхӑну валҗли—параходпа илсе кайаҫҫӗ.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Республикӑ ҫарӗсем хӗвелтухӑҫри (Арагонри) фронтра ҫаплах тапӑнса пырса, октябӗрӗн пӗрремӗшӗнче Хака хулин районӗнче икӗ сӑртлӑ ҫӳлӗ вырӑн тата халӑх пурнакан Рапун, Ермита де Санта Агуйеда тата Коронас де Алҗйуне йатлӑ пунктсене йышӑннӑ.

Ҫурҫӗрти фронтӑн хӗвелтухӑҫ пайӗнче Лҗйанес хули районӗнче фашиссем кӑшт малала кайнӑ. Хихон ҫывӑхӗнче фашиссен икӗ самолҗотне персе антарнӑ.

Тӗп фронтра, Мадридран ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ йенеле, октябӗрӗн 1-мӗшӗнче ҫӗрле республиканцӑсем фашиссен атакине ҫапса салатнӑ. Вӑл фашиссем правителствӑ ҫарӗн ҫар ӗҫӗсене чӑрмантарасшӑн пулнӑ.

Октябӗрӗн пӗрремӗшӗнче фашиссен виҫӗ ескадрилйи Барселонӑ ҫине виҫӗ хут бомбӑ пӑрахнӑ. Унтан айаларах анса мирлӗ ҫынсем ҫине, вӑл шутрах шкул ачисем ҫине те пулеметсенчен пенӗ. Бомбӑ пӑрахнипе 34 ҫурт ҫӗмӗрӗлнӗ, 45 ҫын вилнӗ, 87 аманнӑ.

(ТАСС).

Чукун ҫул строителствинчи стахановла вунӑкунлӑх

Иккӗмӗш кун

Стахановла вунӑкунлӑхӑн иккӗмӗш кунӗнче пӗтӗмпе 42.155 тенкӗлӗх ӗҫ тунӑ. Ку пӗр кунхи плана 20 процент тултарни пулать. Уйрӑм участкӑсем тӑрӑх илсен, пӗр кунхи плана ҫакӑн пек тултарнӑ: 1-мӗш участкӑ (началҗникӗ Лапуц) —16,8 процент, 2-мӗш участкӑ (началҗникӗ Петров) —17,6 процент, 3-мӗш участкӑ (началҗникӗ Дашков)—33,7 процент, 4-мӗш участкӑ (началҗникӗ Баканӑв)—10,8 процент, 5-мӗш участкӑ (началҗникӗ Захарйонӑк) —33,4 процент, 6-мӗш участкӑ (началҗникӗ Андрейӗв)—34 процент, 7-мӗш участкӑ (началҗникӗ Ременски)—12,8 процент, 9-мӗш участкӑ 6,3 процент.

Виҫҫӗмӗш участкӑ 96—95-мӗш километрсенчи трубасем ҫине тӑпра тултарса ҫитермен пирки релҗсӑсем хывасси те чарӑнса тӑнӑ. Ҫакна пула 8-мӗш участкӑ хӑйӗн планне 9,3 процент ҫеҫ тултарнӑ.

Ҫакнашкал чӑтма ҫук сӳрӗккӗн ӗҫлени ӗҫ вӑйӗ ҫителӗклӗ пулманнинчен килет. Районсенчи организацисем строителствӑна ӗҫвӑйӗ организацилесе йарас тӗлӗшпе питех те мӗшӗлтетсе ӗҫлеҫҫӗ. Ҫакна пула вунӑкунлӑхӑн 2-мӗш кунӗнче строителствӑра ӗҫ вӑйӗ чакни палӑрчӗ. Вунӑкунлӑхӑн 1-мӗш кунӗнче ҫураннисем 3383 ҫын, лашалисем 1185 ҫын ӗҫленӗ пулсан, 2-мӗш кунӗнче ҫураннисем 3020 ҫын, лашалисем 1083 ҫын ҫеҫ ӗҫленӗ. Ку Йӗпреҫ, Канаш, Трак, Шупашкар тата Тӑвай районӗсенчи колхозсенчен пынисем таврӑнса кайнӑ пирки пулнӑ.

Йелчӗк районӗ халӗ те ыйӑхран вӑранман-ха. Ку районран пӗр ҫын та ӗҫлемест. Вӑрнар, Сӗнтӗрвӑрри, Турхан, Вӑрмар тата Шӑхасан районӗсем те начар ӗҫлеҫҫӗ. Вӑл районсенчен 5—6 ҫыншар ҫеҫ ӗҫлеҫҫӗ.

Вунӑкунлӑхӑн иккӗмӗш кунӗнче плана тултарас тӗлӗшпе Шӑнкӑртам районӗнчен пынӑ Шапурӑв бригади лайӑх тӗслӗхсем пачӗ. Унӑн бригади нормӑна 110 процент тултарчӗ. Ҫавӑн пекех виҫҫӗмӗш участкӑри Симӑнӑв бригади 101 процент, Волкӑв бригади 102 процент тултарнӑ. Пиллӗкӗмӗш участкӑри Скробӑв бригади нормӑна 115 процент тултарнӑ. Анчах вӗсен пахa тӗслӗхӗсене сарасси йерипен пулса пырать.

Вунӑкунлӑхӑн малтанхи икӗ кун хушшинчи ӗҫсем строителствӑри тата районсенчи организацисем тимлӗн ӗҫлеме тытӑнманни ҫинчен калаҫҫӗ. Кун пек начар ӗҫлеме никамӑн та нимӗнле сӑлтав та ҫук. Вӑхӑта вӑраха йамасӑр кашнин чукун ҫулне Октябӗр уйавӗ тӗлне туса пӗтерессишӗн пыракан кӗрешӗве хутшӑнмала.

Комсомолӑн облаҫри XIV-мӗш конференцийӗ

Октябӗрӗн 2-мӗш. Каҫхи лару

Пренире Киселҗов (Ҫӗрпӳ), Иванов (Ҫӗрпӳ), Хуртин (Куславкка), И. Петров (Шупашкар хулинчен) тата Йазыкӑвӑ (Йӗпреҫ) йулташсем тухса каларӗҫ.

Райкомсем укҫа-тенкӗсене тирпейсӗр тыткаланине паллӑ туса, Киселҗов йулташ малашне облаҫри ревизи комиссийӗн райнрисене пулӑшмалине кӑтартать.

Малала вӑл, комсомол обкомӗн ӗҫӗсемшӗн Обком пленумӗн ытти членӗсем Сымокин тата Терентйӗв пекех ответ тытма тивӗҫли ҫинчен асӑрхаттарса, пренире тухса калакансем ҫапах та вӗсене ҫителӗксӗр критикленине паллӑ тӑвать.

Иванов йулташ ҫутӗҫ пайӗсем учителсене шухӑшламасӑр шкула лартнине кӑтартать. Йӗкӗрвар шкулне йанӑ пионер вожатӑйӗ Орлов, унчен Йетӗренри педучилишчӑра вӗреннӗскер, хулиганла ӗҫсем тунӑ: йал тӑрӑх йытӑсене персе вӗлерсе ҫӳренӗ, пӗр пионера ӑнран кайичченех пӑшал приклачӗпе ҫапса хӗненӗ. Ҫаксем ҫинчен Ҫӗрпӳ райкомолӗнчи пионерсен пайӗн пуҫлӑхӗ Романӑв та, райком секретарӗ Павлӑв та пӗлнӗ, анчах иртӗхсе кайнӑ хулиган пирки нимӗн те шарламан.

— Ҫӗрпӳри ДТС (ачасен техникӑла станцийӗ) пирӗн районра ҫеҫ мар, Чӑваш республикӗнче ҫеҫ мар, пӗтӗм Совет Сойузӗпе илсен те паллӑ пулнӑ. Техникӑ, изобретателствӑ тӗлӗшпе ачасем питӗ йуратса ӗҫлетчӗҫ, ку тӗлӗшпе ҫитӗнӳсем те чылайах пысӑк пулнӑ вӗсен. Анчах 1937 ҫул пуҫламӗшӗнче ҫутӗҫ органӗсем ҫав техникӑла станцине хупса лартрӗҫ те, ӑна ҫӗнӗрен уҫасси ҫинчен ыйтӑва халҗ тин татса пачӗҫ. Кун пек хӑтланни йут етемсем ҫулӑхмасӑр пулман, —тет Иванов й.

Хуртин й. комсомол обкомӗ оборонӑпа физкулҗтурӑ ӗҫне кирлӗ пусӑма лартма тӑрӑшманнине паллӑ турӗ. Осоавиахим организацийӗнчи сӑтӑрлӑ ӗҫсем ҫинчен сигналсем пулнӑ, анчах обком вӗсене хисепе илмен. Ҫарна техникӑ екзаменне партарас тӗлӗшпе ӗҫлекен республикӑри комисси председателӗнче Сымокин, районри комисси председателӗнче комсомол райкомӗсен секретарӗсем ларнӑ. Ку ӗҫ питӗ йапӑх пынӑ пулсан, уншӑн обкомпа райком секретарӗсем пуринчен ытла айаплӑ.

И. Петров йулташ болҗшевисӑма вӗренес ӗҫ питӗ начар пынине, комсомол комитечӗсен секретарӗсем, пропагандиссем, агитаторсем хӑйсен пысӑк ответлӑхне кирлӗ пек туйманнине Шупашкар хулинчи ӗҫ тӗслӗхӗсемпе илсе кӑтартрӗ.

Октябӗрӗн 3-мӗш. Ирхи лару.

Комсомол обкомӗн отчочӗ тӑрӑх Никитин (Канашри вакунсем йусакан савӑтран), Мишаковӑ (ПСҪЛКС Тӗп Комитетӗнчен), Коротков (Вӑрнар р.) тата Толмачов (Шӑхасан р.) йулташсем тухса каларӗҫ.

ПСҪЛКС Тӗп Комитечӗн представителӗ Мишаковӑ йулташ Чӑваш республикинчи комсомол организацийӗнче мӗн пирки питӗ пысӑк ҫитменлӗхсем пулма пултарнине, халӑх тӑшманӗсене мӗн пирки вӑхӑтра тӑрӑ шыв ҫине кӑларса тӑпӑлтарма тытӑнманнине уҫҫӑн кӑтартса пачӗ.

Комсомолӑн йертсе пыракан органӗсенче болҗшевикла самокритикӑ пулман. Обком работникӗсем, уйрӑмӑнах Сымокинпа Терентйӗв, хӑйсене ытлашши пысӑка хунӑ, вырӑнти работниксемпе рйадовой комсомолӗссен кӑтартӑвӗсене шута илмен, самокритикӑна йышӑнман. Сымокин, Терентйӗв, Чекмарйов т. ыт. те перле ӗҫсе ҫинӗ, пӗр-пӗрин ҫитменлӗхӗсене кӑтартман, самокритикӑна пӗтерсе хунӑ. Ҫакӑн пирки вӗсем политикӑла тимлӗхе ҫухатнӑ. Кунпа вара халӑх тӑшманӗсем усӑ курнӑ.

Ҫамрӑк кадӑрсене пӑхса ӳстерес, вӗсене малала кӑларас ыйту ҫинче Мишаковӑ й. уйрӑмӑн чарӑнса тӑчӗ. Ку тӗлӗшпе Обком пачах ҫителӗксӗр ӗҫленӗ; чылай районсенче комсомол ӗҫӗнче ватӑ, „сухаллӑ“ ҫынсем ӗҫлеҫҫӗ; ҫамрӑк кадрсене, комсомолра ӳснӗ ҫӗнӗ ҫынсене малала кӑлармасӑр хӑранӑ.

Колҗцовкӑри Сталин йачӗпе хисепленекен колхоз председателӗ Коротков йулташ халӑх тӑшманӗсем йепле чейе ӗҫленине, социалисӑм строителствине йепле хӑйарӑн аркатма хӑтланнине примерсемпе илсе кӑтартать.

1935-мӗш ҫулта Колҗцовкӑ колхозӗ калаҫакан кино туйаннӑ. Хатӗрсене вырнаҫтарма районран Лапчук текен техник пынӑ. Ҫак етем тӑшман пулнӑ. Кино-оборудованине монтаж тунӑ чухне, вӑйлӑ ток ҫӳрекен електропровӑдсене вӑл йурийех изолҗаци тумасӑр хӑварнӑ. Вара [illegible] кӗске замыкани пулнӑ пирки, [illegible] р 6 кунтан кино- будкӑна вут [illegible] са илнӗ.

— Малтанхи кун кино кӑтартнӑ чухнех усал шӑршӑ тухнине сиссе, вӑхӑтра хурал тӑратман пулсан питӗ пысӑк сийен курмала пулатчӗ: вут ӑшӗнче пирӗн колхозӑн 300 пин тенкӗ тӑракан аслӑ клубӗ, 45 пин тенкӗ тӑракан кино-установкӑ тата 20 пин тенкӗлӗх радиоузел ҫунса кайатчӗҫ.

Тӑшмансем колхозсене питӗ пысӑк сӑтӑр тӑваҫҫӗ. Паллах, вӗсем уҫҫӑн ӗҫлемеҫҫӗ, хӑйсен тӑшман ӗҫне вӑрттӑн тӑваҫҫӗ. Мӗншӗн тесен тӑшмансем уҫҫӑн калаҫас пулсан, колхозниксем вӗсене ҫавӑнтах тӑрӑ шыв ҫине кӑларнӑ пулӗччӗҫ. Совет влаҫӗ туса панӑ пуйан пурнӑҫа колхозниксем никама та аркатма ирӗк парас ҫук.

— Пирӗн колхоз кӑҫал 700 гектар ҫинчен тырӑ пуҫтарса кӗчӗ. Гектар пуҫне, чи сахал шутласан та, 25 центнер тӗш тырӑ тухать, йе, пӗтӗмӗшпе илсен—18000 центнера йахӑн. Вӑл шутран 5000 центнерне вӑрлӑх тума тата патшалӑх валҗли уйӑрмала. Колхозниксем кӑҫал пурӗ 77000 ӗҫкунӗ тунӑ. Вӑт шутлӑр ӗнтӗ,—есӗр хутла пӗлекен ҫынсем!— тет Коротков йулташ,—ӗҫкунӗ пуҫне пирӗн мӗн чухлӗ тырӑ тивет?—Пӗр пӑт. Ҫемйере ӗҫлеме пултараканнисем чи сахал пулнӑ колхозникксем те кӑҫал 200—250 пӑт илеҫҫӗ. Чи лайӑх ӗҫленисем 1300 пӑт илеҫҫӗ. Ҫак телейлӗ пурӑнӑҫа колхозниксем нимӗнле тӑшмана та парас ҫук!

Ҫавӑнпа та, уҫҫӑн ӗҫлесе нимӗн те тума ҫуккине кура, тӑшмансем колхозсене вӑрттӑн сӑтӑрласа аркатасшӑн пулнӑ. Анчах епӗр вӗсене пурӗ пӗр сывлама парас ҫук. Йалт шыраса тупса аркатса тӑкӑпӑр,— тет Коротков йулташ.

Кама шанса панӑ армансене?

СĔНТĔРВĂРРИ. Халӑх тӑшманӗсем тӗрлӗрен майсемпе колхозсенче йӗртсе пыракан вырӑнсене не тепӗр чухне счетовода, завхоза, конюха, фермӑсене, армансем пӗр колхозсенче—арман мельникӗсене кӗрсе вырнаҫма тӑрӑшаҫҫӗ. Районри нумай колхозсенче ҫил арманӗсене, шыв арманӗсене—ӗлӗк арман хуҫи пулнӑ, кулак пулнӑ ҫынсемех мельнике кӗрсе пӗтнӗ. Вӗсене „специалиссем" тесе ӗҫлеттерсе усраҫҫӗ. Уксассинчи Сталин йулташ йачӗпе тӑракан колхозра мельник шутӗнче ӗлӗк хӑй ҫав арман хуҫи пулнӑ Хуранха ҫынни Матвей Семенӑв. Йурӑйавкӑ арманӗнче—ҫав арман хуҫи пулнӑ Косолапӑв Йевгени ӗҫлет. Сӗнтӗрвӑрринчи Ворошилӑв йачӗпе тӑракан колхозра 2-мӗш номӗрлӗ арманта—ӗлӗк арман хуҫи, кулак пулнӑ Николайӗв Йегор ӗҫлет. Ҫавӑн пекех Чермӗшри „Пищевик" колхозра та.

Паллах ӗнтӗ арман хуҫи, кулак пулнӑ „специалиссем" халӑхшӑн, колхозшӑн кирлӗ, усӑлӑ ӗҫсем тумаҫҫӗ. Вӑл армансенче культурӑлӑ-массӑлӑ ӗҫсем ҫук. Армансенче кашни кун ҫынсем сахал мар пулаҫҫӗ. Арман авӑртакансем авӑртла черет ҫитиччен арман пӳрчӗсенче ларса вӑхӑта иртереҫҫӗ. Армансене таса тытмаҫҫӗ. Вӗсем кӗреҫе тырри пухас плана тултармасӑр чӑрмантарса пыраҫҫӗ. Уксасси арманӗ хӑйӗн 1936—37 ҫулхи планне 69 процент, Йурӑйавкӑ арманӗ 73 процент, Сӗнтӗрвӑрри арманӗ 69 проц., Чермӗш арманӗ 62 процент кӑна тултарнӑ.

Армансене кӗрсе вырнаҫнӑ кулак, арман хуҫи пулнӑскерсем ҫакнашкал сӑтӑрлӑ ӗҫсем туса пыраҫҫӗ пулсан та, армансем ҫине никам та ҫавӑрӑнса пӑхмаст.

Ваҫилйӗв.

Шӑлан ҫырлине пуҫтарар

Пирӗн республикӑра тӗрлӗ хаклӑ емелсем тума йурӑхлӑ ӳсентӑрансем нумай. Чылай вырӑнсенче шӑлан (йӗплӗ хулӑ) ҫырли нумай ӳсет. Ҫак ҫырлара ҫын валли ҫав тери кирлӗ, усӑлӑ витамин „С" текен йапала пур. Шӑлан ҫырлисенчен тӗрлӗрен емелсем, кондитерлӑ йапаласем, вареньесем, конфектсем тата ыттисене те тӑваҫҫӗ. Ҫак ҫимӗҫсене ҫисен цынга текен чир (шӑл туни ҫемҫелни) йересрен хӑтӑлма пулать тата ку чирпе чирлесен те сывалма пулать. Пурнинчен ытла витамин „С" ҫурҫӗрпе Арктикӑсенчи халӑхсене тата експедицисене кайакан ҫынсем валли нумай кирлӗ.

Шӑлан ҫырлине хӑшпӗр районсенчи колхозсенче ҫарансем ҫинче, вӑрмансенче, уйрӑмӑнах Атӑл, Сӑрӑ, Ҫавал шывӗ хӗррисенче нумай тупаҫҫӗ. Кӑҫалхи ҫул шӑлан ҫырлисем нумай пулчӗҫ.

Шӑлан ҫырли пуҫтарас ӗҫ йавӑр мар тата ӑна пуҫтарма та усӑлӑ. Пӗр ҫын кунне 20—25 килограм пуҫтарма пултарать. Типӗтнӗ хыҫҫӑн 10—12 килограм йулсан унтан 16—20 тенкӗ тупӑш тума пулать. Халь шӑлан ҫырлисем пӗтӗмпех пиҫсе ҫитнӗ, вӗсене пуҫтарма хӑлех тытӑнмала.

Пуҫтарнӑ ҫырласене типӗтиччен малтан тунисемпе пуҫӗнчи вӗт ӳлҫисенчен тасатас пулать.

Типӗтессе кӑмакара, кӑмака ҫинче тата хӑмлапа салат аванӗсенче те типӗтме пулать. Типӗтнӗ чухне 40—50 градус ӑшӑ тытса, ӳхен сарса хумала. Типӗтсе хатӗрленӗ ҫырласем ҫинче ҫунмӑ ҫырласем тата тӗрлӗрен ҫӳп-ҫапсем пулмала мар.

Лайӑх типӗтнӗ ҫырласене: пур аптексенче, аптека магазинӗсенче, йалпосенче тата ытти хатӗрлев организацисенче те илеҫҫӗ.

Е. Николайӗв.

Ӑратлӑ выльӑхсемшӗн

СĔНТĔРВĂРРИ. Кӑҫал ҫуркуне Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи колхозсене выльӑхсен ӑратне лайӑхлатма красно-горбатовски вӑкӑрсем—20, цыгай меринос такасем — 420 илсе килнӗ. Кусемсӗр пуҫне ҫентаберӗн 29-мӗшӗнче каллех, лайӑх ҫӑмлӑ ӑратлӑ цыгай такасем 75 илсе килчӗҫ.

В. Ваҫилйӗв.

Пӗччен 200 пӑт тӗш тырӑ илет

ИШЛЕЙ (хамӑр инфор.) Мускаринкассинчи колхозра кашни ӗҫкунӗ пуҫне тӗш тырӑ 6 килограм тивет. Никифор Сидӑрӑв—колхозри стахановец. Вӑл кӑҫал 590 ӗҫкунӗ тунӑ, пурӗ 200 пӑт ытла тӗш тырӑ илет, Йемелйан Миаҫников 180 пӑт илет. Ҫапла ӗнтӗ йалхуҫалӑхӗнче стахановла ӗҫленӗ колхозниксен амбар тулли тырӑ пулать.

Чӑваш АСС Республик Ҫӗрӗҫ Халӑх Комиссариачӗн октаберӗн 1-мӗшне ҫилос хывасси мӗнле пынине кӑтартакан

СВОДКИ

РАЙОНСЕМ	План тӑрӑх (тоннӑпа).	Плана тултарнӑ (тоннӑпа)	Плана тултарнӑ (процентпа)
Улатӑр	7000	1063	15,2
Елӗк	9500	3295	34,7
Патӑрйел	7000	2159	30,8
Вӑрнар	10000	2108	21,0
Йӗпреҫ	8000	1953	24,4
Ишлей	10000	1725	17,3
Канаш	6500	1130	17,4
Куславкка	8000	3702	46,3
Кувакинӑ	6000	860	14,3
Хӗрлӗ Чутай	10000	450	4,5
Сӗнтӗрвӑрри	9000	3025	44,7
Пӑрачкав	8000	1166	14,6
Турхан	6000	2350	39,2
Тутаркас	12500	1142	9,1
Трак	8000	2775	34,7
Вӑрмар	8000	1455	18,2
Ҫӗрпӳ	9000	1415	15,7
Шупашкар	9500	2271	23,9
Шӑмӑршӑ	5000	784	15,7
Шӑхасан	8000	1214	15,2
Шӑнкӑртам	4000	1014	25,4
Ҫӗмӗрле	8000	1246	15,6
Йетӗрне	10000	2930	29,3
Йелчӗк	7000	1200	17,1
Тӑвай	6000	2027	67,1
ЧАССР-пе	200000	44454	22,2

Харйкӑври „Хлоратӑр" савӑтра искусственнӑй майпа ҫӑмӑр ҫутармали агрегатсен аппарачӗсене тӑвас ӗҫе йӗркелесе йанӑ.

ӲКЕРЧӖК ҪИНЧЕ: Цех начальникӗ В. И. Давыденко тата мастӗр П. А. Шаповалӑв йулташсем „ХОМП—5" системӑлӑ аппарата пӑхаҫҫӗ.

Й. Сапожникӑв фото-ӳкерчӗкӗ (Союзфото)

Выльӑх апачӗ ҫине тӳнтерле пӑхаҫҫӗ

Трак районӗнчи, Карай йалсоветне кӗрекен „Большевик" колхоз кӑҫал пӗр тоннӑ та ҫилос хывмарӗ. Ҫилос хывнӑ вӑхӑтра куракӑсем сайа кайасран, колхозниксем колхоз председателне С. Петрова ҫилос хывасшӑн темчул каларӗҫ пулсан та, пачах шутламарӗ. Колхоз правлени колхозниксен выльӑхӗсем валли апат пултӑр тесе пӗре те шухӑшламаст. Кӑҫал ҫилос хывса хӑварнӑ пулсан, ҫав ҫилос тӳпилӗх колхозниксене выльӑх апачӗ ӗҫкунӗпе валеҫӗнетчӗ тесе шутлаҫҫӗ колхозниксем. Колхоз председателӗ Петров ҫилос хывманни ҫинчен ыйтсан, пирӗн ҫилос хывни иртнӗ ҫулсенче те питӗ нумай, тет. Иртнӗ ҫулсенче хывнӑ ҫилоса колхоз председателӗ Петров кӑлартармарӗ, колхозӑн пӗрлештернӗ выльӑхисене кӑларса ҫитермерӗ. Иртнӗ хӗлле выльӑх апачӗ ҫитмен пирки колхозниксем айакран илкелесе тӑрантаркаласа пурӑнчӗҫ. Халь анкартинчи улӑмсене, арпасене те тирпейлӗ пуҫтартарса хуман, вӗсем ахалех ҫӗрсе выртаҫҫӗ.

И. Петров.

Патшалӑх умӗнчи парӑмсене памасӑр тӑраҫҫӗ

Трак районӗнчи „Хӗрлӗ Пӑрденер" колхоз пуса татса пӗтерсенех шыва хутас вырӑнне, колхозниксене ӗҫкунӗ тӑрӑх валеҫсе пачӗ. Халӗ кантӑра хутса кӑларсан тин патшалӑха сӳс-кантӑр пама шутлать, анчах кантӑрне халӗ те хутса пӗтереймен-ха. Колхоз председателӗ Петров Тарас кун ҫинчен шутласа та пӑхмаст.

Ҫакнашкалах тата ҫӗрулми парасси ҫинчен те нимӗн те шутламаҫҫӗ. Ҫӗрулми вырӑнӗ ҫине ҫӗрулми кӑларас тӗлӗшпе пӗр ҫын та пырса пӑхман. Кун ҫинчен бригадирсем те, председател те манса кайнӑ. Бригадир Захарӑв никама курӑнас мар тесе, тарса ҫӳрет. Критикӑран шикленсе пӗр собранине те пымаст.

Пӑрӑнтӑкри „Хӗрлӗ Пӑрденер" колхоз патшалӑха тырӑ парассине хакламаст. Нумайӑх пулмаст патшалӑха улталас шутпа таса мар тырра илсе кайнӑ. Вӑл тырра илмен, халӗ председател савӑннӑ. Пӗрре илсе кайса, калла килмӗскер, урӑх илсе каймастпӑр, тесе ҫӳрет.

А. Крепков.

Радиофестивалӗн 2-мӗш кунӗ

Улатӑр хулин художествӑлӑ пултарулӑхӗ мухтава тивӗҫлӗ

Фестивалӗн 2-мӗш кунӗнче Вӑрмар районӗпе Улатӑр хулин художествӑлӑ пултарулӑхӗсене итлерӗмӗр. Выступленисене ӑрасна илсе хак парас пулсан, ҫакна калама тивет: Вӑрмар районӗпе Улатӑр хулин художествӑлӑ пултарулӑхӗсем хушшинче, маҫтӑрлӑх тӗлӗшӗнчен те, репертуар пуйанлӑхӗ йенчен те тата радиофестивале хатӗрленсе кӗтсе илнӗ тӗлӗшпе те, уйрӑмлӑх питӗ пысӑк.

Улатӑр хулин художествӑлӑ пултарулӑхӗ чылай йенчен профессионаллӑ искусствӑ патне ҫывхарса пырать, ун ҫинчен пӗр иккӗленмесӗрех каламала. Улатӑр хули фестивале лайӑх организациленсе, пысӑк пахалӑхпа хатӗрленсе кӗтсе илнине кӑтартрӗ. Улатӑр хули художествӑлӑ пултарулӑхсен вырӑнти смотрӗ витӗр 600 ҫын ытла кӑларнӑ, смотӑрсенчи выступленисене итлеме 26 пин те 700 ҫын ытла хутшӑннӑ. Ку тӗслӗх Улатӑр районӗнчи фестиваль комиҫҫийӗ радиофестивалӗн задачисене тӗрӗс ӑнланса, ӑна тӗплӗн пурнӑҫлама тӑрӑшни ҫинчен калать.

Улатӑр хулинчен микрофон умӗнче виҫӗ хор коллективӗ пулчӗҫ. Радиофестивалӗн республикӑри жӳрийӗ хор коллективӗсене ҫакӑн пек хак пачӗ: хор коллективӗсен маҫтӑрлӑхӗ, вӗсен йурӑ культури ҫӳлте тӑрать. Вӑл Улатӑр хулинче художествӑлӑ пултарулӑх ҫулран ҫул ӳссе, сарӑлса пынине кӑтартать. Чукун ҫул ҫинче ӗҫлекен ИТР арӑмӗсен хорӗ (Коновалӑв йертсе пырать) кӑҫал ҫеҫ организациленнӗ пулин те, Сталин ҫинчен т. ыт. йурӑсене те лайӑх йурларӗ. Ҫакӑн пекех, Улатӑрти виҫӗ вӑтам шкулра вӗренекенсенчен пуҫтарса организациленӗ ачасен хорӗ те (Ховринпа Малинина й-сем йертсе пыраҫҫӗ) хӑйӗн йуррисене пысӑк маҫтӑрлӑхпа йурласа пачӗ. Педучилищӑра вӗренекенсен хорӗ уйрӑмах Ворошилӑв ҫинчен хунӑ йурра аван йурларӗ.

Улатӑр хулин выступленинче тепӗр аван тӗслӗх—пӗччен йурлакансем (Карачаровский, Бениенко, Миронова) йурӑ ӑсталӑхӗпе те, сасӑ усӑлӑхӗпе те питӗ кӑмӑла карӗҫ. Анчах йурӑсене тӑсарах йурлани вӗсен пахалӑхне чакарать. Кунсӑр пуҫне, пӗччен инструментсемпе выльакансене те жӳри начар мар хак пачӗ. Анчах ройальпе перле выльанӑ чух йурлакана ройаль сасси килӗшсе пыманни палӑрчӗ, ҫапах та ку ҫитменлӗхе тӗп ҫитменлӗх теме ҫук.

Ҫапла, пӗтӗмӗшпе илсен, Улатӑр хулин выступленийӗ ӑнаҫлӑн иртрӗ. Техникӑ лайӑх пулнӑ пулсан, Улатӑр хулин выступленийӗ тата аванрах, тата йанравлӑрах пулнӑ пулӗччӗ.

Вӑрмар районӗнчи художествӑлӑ пултарулӑхӑн выступленийӗ пирки жӳри хӑйӗн шухӑшне ҫакӑн пек палӑртрӗ. Вӑрмар районӗн выступленийӗ начар пулчӗ. Ку айӑп—районри фестиваль комиҫҫийӗ пархатарсӑр хатӗрленнинчен килет. Фестиваль комиҫҫийӗ районти художествӑлӑ пултарулӑха палӑртман, выступленине йачӗшӗн ҫеҫ иртерес тесе, кам куҫ тӗлне пулнӑ, ҫавна микрофон умне пырса тӑратнӑ пек туйӑнчӗ.

Фестивалӗн 2-мӗш кунӗ пирки, пӗтӗмӗшпе илсен, ҫакна калас пулать: художествӑлӑ пултарулӑх коллективӗсенчен чылайӗшӗн маҫтӑрлӑх ҫителӗксӗр пулсан та, туртӑм вайли курӑнать. Халӑх пултарулӑх коллективӗсем ҫӗнӗ йурӑсене вӗренме тӑрӑшаҫҫӗ, хамӑрӑн савӑнӑҫлӑ пурнӑҫ ҫинчен хаваслӑ йурӑсем йурласшӑн, анчах пирӗн чӑваш композитӑрӗсем халӑха ҫӗнӗ йурӑсем ҫырса парас тӗлӗшпе начар ӗҫлеҫҫӗ. Ҫӗкленме, маҫтӑрлӑх илме ыткӑнакан пултарулӑх коллективӗсем валли халӑх творчествин ҫурчӗ руководителсем тупса памаст. Фестивальри выступленисем пирӗн профессионаллӑ искусствӑ ҫыннисем, халӑх творчествин ҫурчӗ, Искусствӑ ӗҫӗсен управленийӗ мӗн таран начар ӗҫленине уҫҫӑн кӑтартса параҫҫӗ.

Иакку Арӑслан.

Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗ тӑван чӗлхепе литературӑна вӗрентес ӗҫри сӑтӑрсене халӗ те пӗтермен

Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн ҫитӗннисене вӗрентес йеҫӗпе ӗҫлекен управлени пуҫлӑхӗ Романӑв тата ҫав управленин инспекторӗ Клементйӗв август уйӑхӗн 29-мӗшӗнче пур районри ҫутӗҫ пайӗсене те „ӗҫлӗ" хут йачӗҫ. Вӑл хутра ҫитӗннисене вӗрентес ӗҫе йӗркелемели план тума кирлине тата 1937—38 вӗренӳ ҫулӗнче ҫитӗннисен шкулӗнче мӗнле учебниксемпе усӑ курмалине кӑтартса панӑ. Кӗнекесен спискинче А. С. Отачкин ҫырнӑ „Тӑван чӗлхепе вуламали кӗнеке" те пур.

Отачкин кӗнеки 1936 ҫулта тухнӑ. Вӑл хӑйӗн содержанийӗпе сийенлӗ кӗнеке. Кӗнекере фашисла бандитӑн Тухачевскин сӑнӗ пур, кунсӑр пуҫне, кунта Краснов-Асли троцкисӑн произведенийӗ те чылай вырӑн йышӑнса тӑрать.

Ҫутӗҫ Комиссариачӗ ҫитӗннисен шкулӗнче тӑван чӗлхепе чӑваш литературине вӗрентме ҫӗнӗ программӑпа ҫӗнӗ учебниксем туса кӑларман. Чӑваш литературин кивӗ программинче (1936 ҫулта кӑларнӑ) килте вулама Краснов-Асли, Патман тата ытти тӑшмансен произведенисене сӗннӗ. Ҫутӗҫ халӑх комиссариачӗ ку программӑна улӑштарман, сӑтӑрлӑ программӑ йалти ҫитӗннисен шкулӗнче халӗ те ҫӳрет.

Мӗн ку, сӳрӗк ӗҫлени йе тӑшман ӗҫӗ? Г. Петров.

Пусуҫаврӑнӑшсем ҫинчен

Йӗтӗне ӑҫта акмала?

Вӑйлӑ тырпул туса илесси ман шутпа, пусуҫаврӑнӑшне тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пынинчен килет. Хӑшӗ-пӗрисем тислӗк пулсан пурте пулать теҫҫӗ. Ку тӗрӗсех мар. Чылай чухне тырӑ тислӗклӗ вырӑнта та начар пулать, епӗ ӑна хамӑн практикӑлӑ ӗҫсенчен те аванах куратӑп.

Иртнӗ ҫулта пирӗн 10 гектартан 49 пин йӗтӗн ҫурӑмӗ тухнӑччӗ. Кӑҫал та ҫав вырӑнах акрӗҫ. Ҫавӑнпа та кӑҫал йӗтӗн пирӗн колхозӑн ҫав тери начар пулчӗ, 10 гектартан пӗтӗмпе те 8—9 пин ҫурӑм ҫеҫ тухрӗ.

Ман шутпа килес ҫул пирӗн йӗтӗне тимофейӗвкӑ акса пурӑннӑ вырӑна йе вӑрман кӑкласа акмала. Тимофейӗвкӑ 4 ҫул ӗнтӗ пӗр вырӑнта, вӑл та начар ӳсет. Ытти ҫӗре акма майӗ ҫук, ҫӗр хӑйӑрлӑ. Унта ытти культурӑсем ҫеҫ ҫитӗнме пултараҫҫӗ.

Анчах районри агрономсем, колхозсенче сахал пулнӑ пирки, ҫаксене асӑрхаттармаҫҫӗ. Пусуҫаврӑнӑшне тӗрӗс пурнӑҫа кӗртсе пырсан, вӑйлӑ тухӑҫ илме пулать. Постановлени пройектне ырлатӑп епӗ.

Ҫӗмӗрле колхозӗнчи бригадир—

Г. Лаврентйӗв.

Гектартан 20 центнер

Пӑвайалӗнчи „Большевик" колхоз (Вӑрнар р.) иртнӗ ҫуркунне 6 гектар ҫине махоркӑ лартса хӑварчӗ. Махоркӑ патӗнче ӗҫлеме 12 ҫынтан уйрӑм бригадӑ организациленӗ. Ҫак 12 ҫын махоркӑ патӗнче ырми-канми ӗҫлерӗҫ. Вӑхӑтра шӑварнӑ, ҫумланӑ.

Халь 6 гектар ҫинчи махоркӑна пуҫтарса йатарласа тунӑ сарайне ҫакса пӗтерчӗҫ.

Махоркӑ патӗнче уйрӑмӑнах хӗрарӑмсем тӑрӑшса, пӗр-перинпе ӑмӑртса ӗҫлерӗҫ. Чернова Е., Кошкина, Иванова, Чернова Ф. кулленхи ӗҫ нормине 150 процент тултарса пычӗҫ. Махоркӑ гектартан 20 центнер тухрӗ.

Д. Ваҫилйӗв.

Социалисӑмлӑ Аслӑ Октаберти револьуци пулни XX ҫул тултарас умӗн

О. УСТУЖАНИНА

Социалисӑмлӑ Аслӑ револьуцийе хатӗрленни*)

Буржуалӑ пичет Демократилӗ канашлу тата Предпарламент ҫинчен шавланине хирӗҫ большевиксем Сталин йулташӑн „Пӗтӗм влаҫ советсене" йатлӑ статйипе ответлеҫҫӗ. Ҫав статйа „Рабочий путь" хаҫатра 1917 ҫ. ҫентаберӗн 30 (17)-мӗшӗнче пичетленнӗ.

„Револьуци пырать,—тесе ҫырать Сталин йулташ ҫав статйара,—ийуль кунӗсенче персе пӑрахнӑ, Мускаври канашлура „сӗре йытарнӑ" револьуци пуҫне ҫӗнӗрен ҫӗклет, кивӗ чӑрмавсене ҫӗмӗрет, ҫӗнӗ пурнӑҫ тӑвать. Контрреволюци окопӗсен пирвайхи йӗрӗсене туртса илнӗ. Корнилӑв хыҫҫӑн Каледин кайала чакать. Ӗлӗкрех вилнӗ советсем кӗрешӳ вутӗнче чӗрӗлеҫҫӗ. Вӗсем каллех руль патне тӑраҫҫӗ, револьуцилӗ массӑсене йертсе пыраҫҫӗ.

Пӗтӗм влаҫ Советсене—ҫапла ҫӗнӗ йухӑмӑн лозунгӗ.

Ҫӗнӗ йухӑма хирӗҫ кӗрешме Керенский правительстви тухать...

Пӗтӗм влаҫ империалисла буржуазийе—ҫапла Керенский правительствин лозунгӗ.

Иккӗленӳ пулма пултараймасть: Пирӗн умра икӗ влаҫ: Керенскийпе унӑн правительствин влаҫӗ, тата Советсемпе комитетсен влаҫӗ. Ҫав икӗ влаҫ хушшинчи кӗрешӳ—акӑ мӗн пулать халӗ пурӑнса иртерекен самантӑн паллӑлӑхӗ.

Йе влаҫ Керенский правительствинче—вара ук чухне улпутсемпе капиталиссем пуҫпулса тӑрасси, вӑрҫӑ тата йухӑнса кайасса.

Йе Советсен влаҫӗ—вара ун чухне рабочисемпе хресченсем пуҫпулса тӑрасси, мир тата йухӑнчӑка пӗтересси.

Ҫапла, ҫапла кӑна лартать ыйтӑва пурнӑҫ хӑйех.

Влаҫ кризисӗ пулнӑ вӑхӑтра револьуци ҫав ыйтӑва лартнӑ.

Господа соглашательсем тӳрех ответ парасран кашниччӗ пӑрӑннӑ, вара пӑрӑнса кайса, влаҫа тӑшмансене панӑ. Советсен сийесӗ вырӑнне канашлусем пухса соглашательсем тепӗр хут пӑрӑнса кайса, влаҫа буржуазийе парасшӑн пулчӗҫ. Анчах вӗсем хисепре йӑнӑшрӗҫ. Вӑхӑт ҫитрӗ, халӗ ӗнтӗ урӑх пӑркаланма ҫук.

Пурнӑҫ лартнӑ тӳррӗм ыйтӑва хирӗҫ, уҫҫӑн тата тивӗҫлӗ ответ памала.

Советсемшӗн йе вӗсене хирӗҫ?!.

Суйласа илчӗр ӗнтӗ господа соглашательсем" (**Сталин,** „На путях к Октябрю" стр. 168—170).

Соглашательсем вара суйласа илнӗ. Вӗсем кашни кун сӗмсӗрленсе пыракан капитала лакейӗ пулӑшса пынӑ, вӑл политикӑра та, економикӑра та, ҫӗршывӑн финансӗнче те корниловла программӑна пурнӑҫа кӗртсе пынӑ. Револьуцийе пӑвса пӑрахас тесе капиталиссем ӗҫхалӑх аллинчен пурӑнма кирлӗ йапаласене тӑпӑлтарса илсе пынӑ. Керенский правительстви ҫентаберӗ уйӑхӗнче тараватлӗ... липе тырӑ тата хутмали йапаласен ... сене, транспорт тарифӗсене ӳстерӗ... спекулянтсен усламӗсенчен налог и... ҫине чакарнӑ, сахӑра, чейе, шӑрпӑка та ытти кулленхи кирлӗ таварсене монополи йӗркипе сутмала тунӑ, вӗсен хакӗсене 2—3 хут ӳстернӗ.

Ҫаксем ӗнтӗ пурте револьуцилӗ кризис ӳсессине васкатнӑ. Ҫав кризисран Вӑтам Азире, Крымра, Таганрогра, Тамбов, Кишинев тата ытти кӗпӗрнесенче чылай восстанисем пулса кайнӑ.

Икӗ ерне иртет. Ҫывӑхарса пыракан кризис, тата ҫавна май восстани самӑнчӗ ҫывӑхарса килни ҫинчен Ленин панӑ анализ тӗрӗс пулнине ун чухне пулнӑ ӗҫсем пӗтӗмӗшпех ҫирӗплетсе панӑ. Ҫентаберӗн вӗҫӗнче револьуцин улшӑнулӑ саманчӗ ҫитни паллӑ пулнӑ.

Октаберӗн 12-че (ҫентаберӗн 29-че) Ленин „Кризис ӗлкӗрсе ҫитнӗ" йатлӑ статйа ҫырать. Ҫав статйара вӑл контрреволюци вӑйӗсем „йулашки йӗр" патне ҫитни ҫинчен фактсемпе кӑтартса парать. Вӑл калать, пирӗн хресченлӗ ҫӗршывра, револьуци пулни 7 уйӑх иртсен, хресченсем револьуци кӗрешсе илнисемпе усӑ курма тытӑнмала пек туйӑнать, тет.

Ҫав вӑхӑтрах контрреволюци Корниловӑн йал ҫине тапӑнас программине пурнӑҫа кӗртсе пынӑ. Контрреволюци ҫӗр комитечӗсене арӗслеме тата улпут кменисене туртса илекен хресченсене пусарма ҫарсем йанӑ. Правительствӑ хӑйех 105 восстанийе пусарнине шутласа кӑларнӑ.

Тамбов кӗпӗрнинче капитан Миронович тата суд палатин прокурорӗ, „хресчен союзӗн" членӗ Стааль апкӑннӑ. Вӗсем хресченсене кавалерипе тата броневиксемпе „пусӑрӑнтарнӑ". Хусан кӗпӗрнине йанӑ отрйадсенче 2700 ҫын ытла хисепленнӗ.

Анчах та Керенскине нимӗн те пулӑшайман ӗнтӗ. Контрреволюцин ҫителӗклӗ вӑйӗ пулман. „Ҫӗнӗ ҫӗрӗҫ министӑрӗн" С. Масловӑн массӑсене ҫӗнӗрен улталамали тата улпутсене ҫӑлмали ҫӗнӗ, „ҫӗрӗҫӗн аслӑ органӗ" тумали пройектсем тухнӑ. Ҫав пройектсем „хӑйсен аллине" пӗр йенчен улпутсем, тепӗр йенчен—хресченсем ҫине хурса, вӗсен пурнӑҫӗсене „йӗркелемелле" пулнӑ. Хакӗт хӳрин... ес-ерсем лартнӑ сыннӑн—ҫав суйа ҫӳпӗлтетни, улпутсем ҫӗр тытса тӑрас йӗркене тӗреклетес тӗлӗшпе хыпӑнса ҫунни, ӗҫсене урӑхла май ҫавӑрса йама пултарайман.

Ҫӗршывӑн нацилӗ пайӗсем—Финляндк, Украинӑ т. ыт. те—Керенский правительствине хирӗҫ тухаҫҫӗ.

Ҫарта правительствӑран Финлянди ҫарӗсем тата Балти флочӗ уйӑрӑлса кайнӑ, салтаксем пурте, пӗр ҫын пекех, ҫапӑҫма кайасшӑн пулман.

Ҫар большевиксем майлӑ пулса пынӑ ҫинчен пур ҫӗртен те хыпарсем килнӗ. Комитетсене ҫӗнӗрен суйлама тытӑннӑ, унтан вара командӑй составсен суйлавӗ пуҫланнӑ. Ҫар Керенский аллинчен кайса пынӑ. Ҫар большевиксем майлӑ шухӑшлани ҫинчен салтаксем кӑна мар, командирсем хӑйсем те каласа кӑтартнӑ. Ун ҫинчен ҫӗвеланӑҫ фронтӑн командӑванийӗн секретлӑ сводки, Хура тинӗс флочӗн командуйушчин доклачӗ те тӳрех каласа панӑ. Большевиксем ӗнтӗ фронт ҫывӑхӗнче: Минскра, Несвижре тата ытти вырӑнсенче пысӑк канашлусене темиҫе те туса иртерме пултарнӑ.

Пур суйлавсенче те большевиксемшӗн питӗ нумай сасӑсем пара пуҫланӑ, чукун ҫул ҫинче ӗҫлекенсем те, почтӑ служащийӗсем те нумайӗшӗ большевиксемшӗн сасӑланӑ.

Ҫав хускану сене пӗрлештерсе, пулса тӑнӑ ларӑ-тӑрӑва Ленин ҫапла хаклать:

„Кризис ӗлкӗрсе ҫитрӗ. Вырӑс револьуцин пӗтӗм малашлӑхӗ картӑ ҫине тӑрать. Большевиксен партийӗн пӗтӗм чыслӑхӗ ыйту патӗнче тӑрать. Пӗтӗм тӗнчери рабочи револьуцин социалисӑмшӑн кӗрешес мӗн пур малашлӑхне картӑ ҫине лартнӑ.

Кризис ӗлкӗрсе ҫитрӗ..."

Сутӑнчӑклӑ етемсене: Иудӑ-Троцкийе, Каменева, Зиновйева, Рыкӑва, вӗсем ҫав кунсенче тӗрлӗ сӑлтавсемпе восстани тумали ыйту ҫинчен йышӑннӑ решенийе хирӗҫ тухнӑшӑн, ҫав шутрах советсен сийесне пухасшӑн тӑхтас сӑлтавпа хирӗҫ тытӑннӑшӑн Ленин вӗсене хирӗҫ питӗ хытӑ тӑрать.

„Нимӗн иккӗленӳ те ҫук, большевиксем, хӑйсене конституцилӗ ильлюзи таппине, Советсен сийесне тата Учредителнӑй Собрани пухассине „ӗненес" таппа, Советсен сийесне „кӗтес" таппа тыттарнӑ пулсан т. ыт. те—иккӗленӳ ҫук, ҫавӑн пек большевиксем пролетариат ӗҫне **сутакан мӗскӗнсем** анчах пулнӑ пулӗччӗҫ..."

„Мӗншӗн тесен, ҫавӑн пек саманта иртерни,—ҫиленсе калать Ленин,—тата Советсен сийесне „кӗтни"—вӑл **пысӑк идиотисӑм йе пӗтӗмпех сутӑнчӑкла ӗҫ туни** пулать... мӗншӗн тесен вӑл, ернесене иртерни пулать, ернесем тата кунсем те пулин халӗ **пурне те** татса параҫҫӗ. Ку ӗнтӗ влаҫа илесрен хӑравҫӑла **калле чакни** пулать, мӗншӗн тесен... ӑна тума май килми пулать (политикӑ тӗлӗшӗнчен те техникӑ тӗлӗшӗнчен те: айванла майпа „палӑртса хунӑ" восстани кунӗ тӗлне казаксене пухӗҫ).

Советсен сийесне „кӗтни"—вӑл идиотисӑм пулать, мӗншӗн тесен сийес **нимӗн те памӗ, нимӗн пама та пултараймасть!"** (**Ленин,** Том XXI, стр. 239—240).

Сталин йулташ „Рабочий путь" хаҫатӑн октаберӗн 2-мӗшӗнче тухнӑ 14-мӗш номӗрӗнчи умстатйинче ҫырнӑ пек, контрреволюци „окопӗсен иккӗмӗш йӗрне" штурмпа илме кирлӗ пулнӑ. Пролетаркат речӗсене тачӑрах пӗрлештерсе кӗрешӗве хатӗрленмелле пулнӑ.

Улпутсене хирӗҫ кӗрешни хресченсен соглашательле ильлюзийӗсене пӗтерсе вӗсене рабочисемпе салтаксем тавра пӗрлештернӗ. Револьуци хӑйӗн вӑйӗсене мобилизациленӗ. Ҫӗршыв пролетари диктатури тума хатӗрлесе ҫитнӗ пулнӑ ӗнтӗ. „Пӗтӗм влаҫ Советсене" тенӗ лозунга пурнӑҫа кӗртмели вӑхӑт, йулашкинчен, ҫитрӗ" (**Сталин**).

Большевиксен партийӗ Ленинпа Сталин йертсе пынипе советсен влаҫӗшӗн кӗрешме хӗҫпӑшаллӑ восстанине хатӗрлене хирӗҫ тытӑннӑ.

*) Йулашки. Пуҫламӗшӗ „Чӑваш Коммунӗн" 226, 227-мӗш номӗрсенче.

Сăтăрла ĕçсен йулашкисене тĕппипех пĕтермеле

Осоавиахимăн Шупашкар хулинчи 2-мĕш конференцийĕ пилĕк кун хушши ĕçлерĕ (çентаберĕн 28-ш— октаберĕн 2-мĕш). Конференци Осоавиахим хула совечĕн отчочĕпе ревизи комиççин отчотне çӳтсе йаврĕ.

Осоавиахим хула совечĕн председателĕ А. Киçельов йулташ (вăлах Рабочисемпе Хресченсен тата Красноармейцăсен депутачĕсен хула совечĕн председателĕ) хăйĕн отчотлă докладĕнче нимĕн çинчен те тĕплĕн калаймарĕ, йе тĕрĕсрех каласан—нимĕн те туманни çинчен çеç чаранса тăчĕ. Хулара оборонă ĕçне йертсе пыма Киçельов хăйĕн заместителне Ваçилйĕва шанса панă. Ваçилйĕв та нимĕн те туман.

Акă мĕншĕн ĕнтĕ конференци делегачĕсем хула совечĕн ĕçне çав тери хытă критиклерĕç, халăх тăшманĕсем Осоавиахим организацисенче сăтăр туса пуранниcене тăрă шыв çине кăларчĕç.

Осоавиахимăн Чăваш республикĕнчи Тĕп советĕнче халăх тăшманĕсем—Йермаков, Льуминарски, Зефирăв, Читнайĕв ларнă. Вĕсем халĕ персе пăрахнă Ейдеман шпионăн заданийĕ тăрăх Чăваш республикĕнче оборонă ĕçне йурийех аркатса пынă. Районсенчи Осоавиахим совечĕсенче хăйсен çыннисене лартса тухнă (Йелчĕк, Çĕмĕрле). Тăшмансем оборонă валльи кадр хатĕрлес ĕçре чăрмантарнă, Шупашкар хулине парашут вышкисĕр, пĕчĕк калибăрлă винтовкă патронĕсемсĕр тăратса хăварнă. Газпа тĕтĕрмели камерăна пĕтерсе лартнă. Организаци укçитенкине сăтăрлă ĕçсем тунă çĕре йанă, хăйсене хăйсем премиленĕ. Йермаковпа Зефирăв хăйсен хватерĕсене йусама 7 пин тенкĕ илнĕ т. ыт. Çак сăтăрлă ĕçсене пурне те шургвардейцă пулнă Львоф, ревизи комиççин председателĕ майĕпе, пытарса хӳтлесе пуранна.

Осоавиахим хула совечĕн председателĕпе заместителĕ—Киçельовпа Ваçилйĕв халăх тăшманĕсемпе йунашарах ĕçленĕ пулсан та, вĕсен сăтăрлă ĕçне асăрхайман, тăрă шыв çине кăларман.

Ваçилйĕв айăпĕпе, конференцине пыма суйланă 34 делегата сасăлама пултаракан правасăр тăратса хăварнă, пуçламĕш организацисенче Осоавиахим членĕсем 20 çынна çитмен пирки тесе, вĕсене калаçламали сасă прави çеç панă. Çак йăнăша конференцинче тӳрлетмеле пулчĕ.

Конференци Осоавиахим хула совечĕн ĕçне пачах çителĕксĕр, тесе йышăнчĕ, политикăлă тимсĕрлĕх пирки халăх тăшманĕсем тунă сăтăрлă ĕçсен йулашкисене пĕтерме мобилизацилеменшĕн Киçельовпа Ваçилйĕва Осоавиавим йĕнĕпе ответ тыттарма, çавăн пекех парти хула комитетĕнчен парти йĕнĕпе ответ тыттарма ыйтрĕ.

Конференци 35 çынтан çĕнĕ хула совечĕ, 11 çынтан ревизи комиççи суйласа хăварчĕ, çавăн пекех Осоавиахимăн республикăри V-ш конференцине кайма 16 делегат суйларĕ.

Белоруççи çар округĕн маневăрĕсенче

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Свйазист—мотоциклиссем № чаçĕн штабне донесени çитерме приказ илеççĕ

Грин фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленер

Октаберĕн 3-мĕшĕнче, Шупашкарта парти райком секретарĕсемпе райĕçтăвком председателĕсен тата районти хаçат редакторĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлу пĕр пысăк ыйту—ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленесси çинчен сӳтсе йаврĕ.

ССР Сойузĕн Аслă Советне суйлама хатĕрленесе çитме вăхăт пур районсемшĕн те çителĕклĕ пулнă. Анчах Суйлава хатĕрленесси пур районсенче те тенĕ пекех çителĕксĕр пырат. „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" Тĕпĕçтăвкомри сведĕнисем тăрăх, пирĕн республикăра халĕ 149 пин çын вĕренеççĕ. Ку вăл суйлавçăсенчен çуррине те çĕнĕ Суйлав саккунне вĕрентме тытăнманни çинчен калат. Суйлав саккунне пичетлесе кăларсанах кашни хапрăк-савăтра, колхозра, йалта массăлă пухусем туса иртерчĕç. Ун хыççăн кружоксем организацилерĕç. Анчах та çак кружоксен ĕçĕсене лайăх йĕркелес тĕлĕшпе парти райкомĕсем те, райĕçтăвкомсем те çине тăрса ĕçлемен. Кружоксене йертсе пыракансем: агитаторсем, пропагандиссем пулса ĕçлеме чи шанчăклă, пултаракан çынсене суйласа илмен. Улатăрти хресчен çурчĕ çумĕнчи кружока „йертсе пыракан" комсомолĕс Впередов кружок членĕсене: хула çывăхĕнчи суйлавçăсем хула советне суйлаççĕ, йал çывăхĕнчи суйлавçăсем йал советне суйлаççĕ, епĕр ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламастпăр, тесе „вĕрентнĕ". Улатăр районĕнчех хăшпĕр кружоксенче вырăссем Националынăççен Советне суйламаççĕ, суйлавçăна суйлав спискине тĕрĕс кĕртмесен, малтан райĕçтăвкома, унтан, Чăваш Тĕпĕçтавкомне жалăбă памала, тесе йăнăш ăнлантарнă.

Тутаркас районĕнче те суйлав саккунне ăнлантарасси питĕ начар. Кунта агитаторсене, пропагандиссене малтан хăйсене нимĕн вĕрентмесĕр, кружок руководителĕсем тунă. Çавăнпа та вĕсем суйлав саккунне йăнăш ăнлантараççĕ. Чемей йалсовет председателĕ Усейкин (парти кандидачĕ) кам суйлав вăхатĕнче агитацилеме хăтланат, епĕ ăна суйлав прависĕр хăваратăп, тенĕ. Кадикассинчи кружок руководителĕ Матвейĕв судпа айăпламан, анчах унăн ĕçне тĕрĕслеççĕ пулсан, ăна суйлава хутшăнтармалла мар, тенĕ.

Çав фактсем епĕр ку пысăк ĕç çине тимлĕн пăхманни çинчен калаççĕ. Ăнсăртран мар ĕнтĕ, Йĕпреç райĕçтăвкомĕн пайĕсен пуçлăхĕсем суйлав саккунĕ çинчен агитацилеме мар, хăйсем те суйлав саккунне вĕренме тытăнман.

Суйлав участкисене уйăрса çитернĕ. Анчах вĕсене тĕрĕс тунине никам та тĕрĕслесе тухман. Кунта йăнăшсем те çук мар. Вĕсене халĕ тӳрлетмеле. Участкăри суйлав комиççисене йĕркелесси те вăраххăн пырат. Суйлавçăсен спискисене участкăсем тăрăх тумалă, çапла пулин те, пĕр район та хăйĕн миçе суйлавçă пуррине тĕплĕн калама пултараймаст.

Суйлава хатĕрленнĕ май политикăла агитаципе пропагандă ĕçне нихăçанхинчен ытла вăйлатмала. Халăх тăшманĕсем суйлав вăхатĕнче хăйсен киревсĕр ĕçне тума хăтланаççĕ. Чиркӳ çыннисем, сектантсем, троцкисла-бухаринла бандăсем, буржуалă националиссем, суйлавпа усă курма хăтланаççĕ. Пирĕн вĕсене çапса аркатмала, Советсене тăшмансем кĕрсе каймала мар тумала. Анчах ку ĕç чылай çĕрте питĕ начар тăрат. Йелчĕк, Патăрйел тата ытти районсенче буржулă националиссем, шурă гвардинче пулнисем пуçĕсене çĕклеççĕ. Çав вăхатрах парти райкомĕсемпе районти хаçатсем вĕсене хирĕç татăклăн кĕрешсе пымаççĕ.

Канашлура тухса калакансем вырăнти организацисем культсут учрежденисем çине çавăрăнса пăхманнине кăтартрĕç. Вулав çурчĕсен, колхоз клубĕсен, хĕрлĕ кĕтессен, культура çурчĕсен, библиотекăсен халĕ чăн-чăн йертсе пыраканĕ çук. Анчах та çав культсут учрежденисем Советсен çитес суйлавĕнче пысăк вырăнта тăраççĕ.

Районри хаçатсем суйлава хатĕрленме йулашки вăхатсенче çеç тытăннă. Вĕсем халĕ те большевикла агитаципе пропагандă ĕçне çителĕклĕ таран сарса йаман. Стена хаçачĕсене, ĕçйалкорсене суйлава хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлеме тин пуçланă. Хаçатсем буржуалă националиссене тата тĕне хирĕç начар кĕрешеççĕ. Парти комитечĕсем агитаци ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнакан хаçатсемпе, радиопа, кинопа усă курассине халĕ те хакламаççĕ.

Канашлу чи малтан партипе совет активне, комсомола, профсойуза, партири тата партире мар большевиксене, хаçатсене, ĕçйалкорсене суйлава хатĕрленме, тăшмансене тупса пĕтерсе хума, агитаципе пропагандă ĕçĕсене сарма мобилизацилеме кирлине кăтартса хăварчĕ. Задачă—советсен суйлавне пĕтĕм вăйа хурса, большевикла иртерме хатĕрленессинче.

Суйлав положени çинчен маннă

ЙЕТĔРНЕ. ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали вăхăт çывхарса килет. Совет Сойузĕн пур кĕтессисенче те: хапрăк-савăтсенче, колхозсенче, совхозсенче, предприйатисенче суйлав саккунне вĕренеççĕ, суйлава хатĕрленеççĕ.

Анчах çак пысăк политикăла ĕç хăшпĕр йалсоветсемпе колхозсенче вуçех те çителĕксĕр, кӳренмеле пулса пыраççĕ. Акă, Мăн Сĕнтĕр йалсоветĕнче суйлав саккунне вĕренессипе мĕн пурĕ те пĕр кружок çеç ĕçлет. Суйлав саккунĕ çинчен колхозниксен пуххинче çителĕклĕн ăнлантарса паман. Чылай колхозниксем суйлав саккунне пĕлмеççĕ. Мăн Сĕнтĕрти туллимар вăтам шкулти учителсем суйлав саккунне ăнлантарса памаççĕ.

Кивĕ Тинкеш йалсоветĕнче те ĕçсем çавăнмалах мар. Кунта та суйлав саккунне ăнлантарас тĕлĕшпе пĕр кружок организацилениĕр пуçне (çитменнине кружокĕ ĕçлемест), урăх нимĕн те тумаççĕ.

Йуманайĕнчи „Большевик" колхозра (Кивĕ Тинкеш йалсовечĕ) ку таранччен те суйлав Положенине ăнлантарса паман. Суйлав саккунне ăнлантарма Охтерăв учителе хушнă, анчах вăл Йуманайне пырса та куранман. Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Кирилăв та çак ĕçе хутшăнмаст.

Анат Мучарти „Победа" колхозра та суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарса парассине хакламаççĕ. Ун çинчен çак тĕслĕх аван кăтартса парат. „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положени" çинчен колхоз пухăвĕнче 5-мĕш ыйтупа çеç сӳтсе-йавнă. Ку ыйту тăрăх калаçăччен пухура 30 çынтан ытла йулман, вĕсенчен те чылайĕшĕ çывăрнă. Колхоз председателĕ Сарбайĕв çапах та: „Суйлав саккунне колхозниксене ăнлантарса панă",—тесе ĕнентерме пăхат.

Пайан куна районĕпе 17 йалсоветра суйлав Положенине ăнлантарса пама пухусем те туман.

Ник. Цветков,
П. Савандей.

Суйлав саккунне вĕрентесси—пысăк чыс

(Кружок руководителĕн çырăвĕ)

Епĕр, Хăймалакасси йалĕнчи (Ишлей р.) туллимар вăтам шкулти учителсем халăха суйлав саккунне вĕрентес ĕçе хутшăнтăмăр. Шкулта суйлав Положенине вĕренме кружок организацилерĕмĕр. Кружока, парти райкомĕ хушнă тăрăх, хамăр шкулти историк Павлăв йертсе пырат. Вăл лайăх вĕрентет. Анчах хамăр вĕреннипе çеç çитмест, кружокри кашни занятии хыççăнах епĕр колхозсене суйлав саккунне вĕрентме тухса кайатпăр.

Епĕ вĕрентме кайакан Лапракасси колхозĕнче пур вăхăтра та 32—34 колхозник вĕренме çӳреççĕ. Вĕсем хушшинче 80 çула çитнĕ старикcем те пур.

Епĕ çапла вĕрентетĕп: малтанах суйлав Положенин уйрăм статйисене вуласа паратăп. Унтан çав статйа тăрăх ăнлантаратăп. Вара колхозниксен шухăшĕсене ыйтса пĕлетĕп. Вĕсем мĕн ăнланнине каласа кăтартаççĕ. Йулашкинчен хама ыйтусем пара пуçлаççĕ. Чылай ыйтусене Конституци тăрăх та, „Правда" хаçат çине суйлав йĕркисем çинчен çырнă статйасем тăрăх та ăнлантарма лекет.

Партире тăман агитаторсем пирĕн колхозсенче пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Анчах вĕсене пулăшас пулат. Хама илсессĕн, мана пулăшакансем сахал-ха.

Кашни учителĕн суйлав саккунне вĕрентес ĕçе хутшăнмала. Вăл пит пысăк паха ĕç пулат.

И. Макçимăв.

Çăмăллине кĕтекен председател

КӲКЕÇ. Чăкăр йалсоветĕнче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенине" вĕренме тытăнман. Йалсовет председателĕ Петров „Аслă Совета суйласси пирĕн ĕçех те мар, ăна суйлама çăмăл пулат" тесе калаçат.

Йалсоветĕнче пурĕ 6 колхоз. Анчах пĕр колхозĕнче те суйлав саккунне йĕркелĕн вĕренни çук. Йалсовечĕ агитаторсем уйăрса хурам пекки тунă, анчах йачĕшĕн çеç. Вĕсем ним те ĕçлемеççĕ. „Çĕнĕ йал" колхозра ку тарана çитсе те кружок уçман.

„Трудовик" колхозра йалсовет пулăшăвне кĕтмесĕрех, колхозниксем хăйсем тĕллĕн кружок уçрĕç. Вĕсем суйлав саккунне вĕренесшĕн кружокра кашни пилĕк кун хушшинче занйати туса ирттерме йышăнчĕç. Анчах йалсовет секретарĕ Н. Ваçилйĕв колхозниксем вĕренессине чăрмав кӳрет. Вăл хăйне хăй „агитатăр" шутласа, малтанах колхозниксем умĕнче кружока йертсе пыма тупа турĕ. Кайран ăна мансах карĕ. Ĕçсе çӳреме пуçларĕ, йалсоветне те пыма пăрахрĕ. Политикăла пĕлĕвĕ унăн сахал.

Вулав çурчĕн пуçлăхĕ Л. Йегорăв пĕр ĕçлемесĕр пуранат. Вулав çуртĕнче „ССР Сойузĕн Аслă Советне суйламали Положенин" брошурисем çук. Çав вăхăтрах халăх тăшманĕсен кĕнекисем тулса выртаççĕ.

Йалсовет председателĕ Петров сăмса айĕнче мĕн пуррине те курмаст.

Парти райкомĕн Чăкăр йалсоветне çитсе курмалах.

Л. Çеменăв.

Електростанци хăçан пулат

ЙЕТĔРНЕ. Пушнарти Мичурин йачĕпе тăракан колхозра 1934 çултанпа ĕнтĕ електростанци тăвасси çинчен халапласççĕ. Анчах електростанцине пайан кунччен те туса пĕтерейменççĕ. Илнĕ динамо халĕ те урам варринче выртат. Ĕçе колхоз председателĕ Димитрийĕв чăрмантарса пырат. Провод çук пирки динамона сутатпăр тесе, хăшпĕр пайĕсене хăйĕн килне илсе кайнă. Провод илме райĕçтăвком такçанах нарйад панă. Анчах Димитрийĕв вăл нарйада илсенех çухатнă.

Ник. Цветков.

А. Журавльов

Ленин пытанса пурăннă çĕртен хĕçпăшаллă восстани çинчен йанă çырусем

Кĕркунне çанталăк сивĕтнĕ пирки Владимир Илйичăн шалашран Гелсингфорс хулине (Финльанди) куçмала пулнă. Шалашра пурăннă чухне те, Гелсингфорсра та Ленин хаçатсем пĕлтернисене тата партин Тĕп Комитечĕн информацине тĕплĕн тĕпчесе вĕренет. Вăл парти пурнăçне, революцилĕ массăсен шухăш-кăмăлĕсене, тăвăллăн ӳссе пыракан революцийе сыхăлăхлă пулса хытă сăнаса пырат. Вăл партийе тата рабочи класа капиталисăмăн тĕрекĕсене штурмлама хатĕрлесе çитерес тĕлĕшпе пĕр минутлăха та чарăнмасăр вирлĕ ĕçлесе пырат.

Партин VI-мĕш сйесне Сталин йулташ хăй йертсе пынă. Партин ку сйесĕ йышăннă решнисенче Ленинăн идейĕсем тата унăн кĕрешӳлĕ хăвачĕ туллин палăрса тăраççĕ. Сйес парти умне хĕçпăшаллă восстани патне пымалли тĕллев лартнă. Ленин вăрттăн пурăннă çĕртен йанă статйисемпе çырăвĕсем те пурте çак тĕп ĕçе татса паракан задачă çинчен пулнă.

Революцин аслă çулпуçĕ В. И. Ленин вăрттăн пурăнма тытăнсан çырнă пĕрремĕш статйинчех ийульри демонстрацийе аркатнă хыççăнхи кĕрешӳ çулĕсене пысăк мастăрлăхпа палăртнă: „Кĕрешӳ тĕллевĕ—влаç пролетариат аллине, чухăн хресченсем пулăшакан пролетариатăн аллине, пирĕн партин программине пурнăçа кĕртме, куçасси çеç пулма пултарат" (Ленин, т. XXI, стр. 27).

Çакăн пек влаç çеç халăха мир, хресченсене çĕр парĕ, рабочисен контрольне туса хурĕ, реакци тĕрекне тĕп тăвĕ.

Ленинла положенисене аталантарса пырса, Сталин йулташ партин VI-мĕш сйесĕнче „Политикăла лару-тăру çинчен" тунă докладĕнче çапла кăтартса панă: „Халĕ епĕр влаçа пролетариат тата чи чухăн хресченсем аллине йарас йеçуп кăларса тăрататпăр". („На путях к Октябрю", стр. 130).

„Политикăла лару-тăру" йатлă, вăрттăн пурăнма тытăнсан çырнă статйара, Ленин хĕçпăшаллă восстани хатĕрлесси çинчен ыйту лартат.

„Вырăс революцийĕ мирлĕн аталанас шанчăксем пурте пĕтмелипех цĕтрĕç. Обйективлă положени: йе вăрçăлă диктатура вĕçне çитийех çĕнтерет, йе рабочисен татăклă кĕрешĕвĕ çĕнтерет, ку вăл економикăлă йухăнчăкпа вăрçă вăрăма кайнă пирки правителствăна хирĕç тата буржуазине хирĕç массăлă тарăн çĕкленӳпе пĕр тĕле килсен çеç пулма пултарат". (Соч., т. XXI, стр. 27).

Кунта влаçа йарса илме халех хĕçпăшалпа тухасси çинчен сăмах çук-ха. Парти задачи—вăйсене пухмала, массăсене вăхăтсăр тухасран астуса тăмала, провокаци туни хыççăн каймала мар, революцилĕ чи тӳсĕмлĕ пулмала.

„Çитес çапăçусене пирĕн тивĕçлипе тата организацилĕ пулса тĕл пулмала" (Сталин).

Çĕршывра куллен кунах революцилĕ кризис ӳссе пынă. Корнилăв загăварне пула рабочисем, ĕçсыннй хресченсем тата салтаксем—улпутсем, капиталиссем, войенщинă контрреволюцилĕ тĕллев тытнине, меньшевиксем-есерсем тăшмана сутăннине куçпах курса ĕненнĕ. Пĕтĕм çĕршыв тăрăх економикăлă, политикăлă стачкăсен тата забастовкăсен çĕнĕ вăйлă хумĕ çĕкленсе пынă. Металлиссем, Донбас горньакĕсем, пир-авăр тĕртекенсем, печатниксем, тир-сăран тăвас ĕçре тата чукун çулсем çинче ĕçлекенсем забастовкă тунă. Йухăм пысăк организацилĕхпе паллă пулнă. Рабочи клас ийульччен 976 профсойуз тума ĕлкĕрнĕ, вĕсен членсем мĕлйун та пилĕксĕр пин çын пулнă. Пролетариат йухăмĕнче çĕнĕ сакă пулнă: рабочисем стачкăсем тата забастовкăсем тунипех чарăнса тăман, вĕсем тата чылай хуласенче администрацине арĕсленĕ, рабочисен контрольне пурнăçа кĕртнĕ. Рабочисен йухăмĕ влаç ыйтăвĕ патне çитсе тăнă.

Советсенче большевиксен партин влийанийĕ хăвăрт ӳссе тата çирĕпленсе пынă. Петроградпа Мускав Совечĕсем хăйсен нумайрахăшĕпе большевикла Советсем пулса пыраççĕ. Корнилăвщинăна аркатса тăкнă хыççăн тепĕр кунне, августăн 31-мĕшĕнче, Петроград Совечĕ пирвайхи хут большевикла резолюци йышăннă. Вăл резолюцире Петроград Совечĕ вăрçа халех чарса лартма, хапрăк-савăт хуçисен саботажне пусарма, рабочисен контрольне пурнăçа кĕртме тата улпутсен çĕрĕсене халех хресченсен аллине пама ыйтнă. Çентаберĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕ большевиксен аллине куçнă. Провинцирен те пĕтĕм влаçа большевикла Советсен илмеле тесе ыйтнисем вĕçĕмсĕр килсе тăнă.

Нумай профсойузсенче, хапрăк-савăт комитечĕсенче т. ыт. организацисенче те нумайрахăшĕ çирĕппĕнех большевиксен партийĕ майлă пулса тăнă. Рабочи клас çакна лайăх ăнланса илнĕ: вăл буржуази влаçне сирпĕтсе йарассишĕн пĕтĕм вăйа хурса кĕрешнипе çеç революцийе çăлса хăварма пултарат.

Вăрçăран хăвăртрах тухассишĕн, пĕтĕм влаçа Советсене парассишĕн йухăм хресчен ĕçсынни массисем хушшинче те вăйлăн хăпарса пынă. Хресченсен выступленийĕсем уйăхран уйăхах нумайланса пынă. Хресчен ĕçсынни массисем хăйсен опытне кура большевиксен партийĕ çеç улпутсене аркатса тăкса пусарассине, революцийе вĕçне çитерессине тата çĕре хресченсене парассине пурнăçа кĕртме пултарнине ĕненсе пынă. Ĕçсынни хресченсем пухусенче большевикла резолюцисем йышăннă, ес-ерсен кулакла партийĕнчен уйăрăлса пынă. Рабочисен революцийĕ тата хресченсен восстанийĕсем çумне нацисен нацилĕ ирĕклĕхĕшĕн пыракан вăрçи хушăннă.

Çарта та революци çавăн пекех хăвăрт ӳссе пынă. Çар командăйĕ составĕ аллинчен вĕçерĕнсе пынă, вăл текех вăрçасшăн пулман. Корнилăв выступленийĕ çарти класлă хирĕçӳсене татăклăнах çийеле кăларса йанă, командăй составĕ шанса тăнин мĕскĕн йулашкисене те сирсе пăрахнă. Салтаксен çырăвĕсенче хайартарах та хайартарах çасăсем илтĕннĕ: „Йулташсем, рабочисем тата салтаксем! Хĕçпăшала усрăр, Петроград çине кайар, буржуйсене, коалицилĕ правителствăна чикес, хĕнес, çакса вĕлерес. Салтакăн окопри асапĕ тулса çитрĕ" („Салтаксен 1917 çулхи çырăвĕсем", ГИЗ, 1927 ç., стр. 141). Фронт ишĕлни тарăна кайса пынă. Çтихийлă демобилизаци, салтаксем тăванлашасси пуçланса кайнă. Çаксем пурте Российăри помещикле-капиталисла уклад ишĕлессе çиçтерне, мĕншĕн тесен кивĕ çар çав укладăн тĕрекĕ пулнă.

Большевиксем çине тăрса тата тăтăшах ĕçлесе пырса çентабĕр уйăхĕ тĕлне Балти тата Хура тинĕс флочĕсенчи морйаксене хăйсем майлă çавăрнă. Балти флочĕн матросĕсем çентаберĕн йулашки кунĕсенче Совет влаçĕшĕн кĕрешĕве тухма пĕтĕмпех хатĕр тăни çинчен рапăрт панă. Хура тинĕс флотĕнчи матроссем çентаберĕн 15-мĕшĕнче хăйсен карапĕсем çине хĕрлĕ йалавсем çакма решени йышăннă.

Çарта тата флотра большевиксен организацийĕсем ӳссе, çирĕпленсе пынă. Вĕсем пулăшса тата йертсе пынипе салтаксен массăлă организацийĕсем салтаксен кивĕ комитечĕсем вырăнне çĕнĕрен суйланă, унтан ес-ерсене—меньшевиксен хăваласа кăларнă, пĕтĕм влаçа Советсене парасси çинчен решенисем йышăннă, кивĕ офицерсене командовани ĕçĕнчен хăваланă, вĕсем вырăнне хăйсем хушшинчен командирсем суйланă.

Командăй состава суйласа хурас çул çине тăрса, салтаксем çарти влаç пирки тăракан ыйтăва ĕçре татса пынă. Çарта революцилĕ йухăм тăвăллăн аталанса пынипе фронтсем çывăхĕнчи хресченсен йухăмĕ тăвăллăн аталанса пынă. Кусем иккĕшĕ пĕрле вăйлă йухăма пĕрлешĕ фронт çывăхĕнчи улпутсене хирĕç çапн пусмăрти нацисем хушшинче те, çарта та тата флотра та çирĕп тĕрексем хĕрешсе илсе пынă.

Большевиксем çине тăрса, хăйсене хĕрхепмесĕр ĕçлесе балта та ... хулара ...

„Буржуази чурисем"—сутăнчăк ес-ерсем тата меньшевиксем вĕсен планĕсене рабочисемпе пĕтĕм ĕçсынниcен, хресченсен тата салтаксен революцилĕ шухăш-кăмăлĕсем ӳсни пĕтĕмпех тӳнтерсе йарассине ăнланнă, а ес-ерсемпе меньшевиксен планĕ — пролетари революцийĕ çĕнтермеле мар, пĕтĕм влаç Советсен аллине куçмала мар тăвасси пулнă. Вĕсем пĕр чарăнмасăр ӳссе пыракан революцилĕ кризиса чарса лартма татах тепĕр хут хăтланса пăхнă. Демократилĕ совещани тенĕскерне пухса, сутăнчăк меньшевиксемпе ес-ерсем революцийе пӳлсе лартма çĕнĕ пĕве тупасшăн, массăсене хĕçпăшаллă восстани хатĕрлес çĕртен пăрса йарасшăн, çапла вара тăшмансене рабочисемпе салтаксен тата ĕçхресченсен революцине йун ăшне путарма çăмăллатса хурасшăн пулнă.

Анчах ĕçсыннисен массисем,—вĕсене большевиксем хатĕрленĕ, — буржуазин тарçисем мĕн тăвас тенине часах туйса илнĕ. Вĕсем кадетсемпе пĕр пуласcипе хирĕç сасăланă. Вара Демократилĕ совещани вăхăтĕнче меньшевиксемпе ес-ерсем массăсенчен уйрăмскерсем пулса тăнă. Вĕсем революцийе парăнтарасшăн пулнине каллех çапса салатнă.

Соглашателсен маневăрĕсене уçса палăртас çĕрте Ленин тата Сталин калама çук пысăк пархатарлă ĕçсем тунă. Вĕсем çинчех тата татăклăн Демократилĕ совещанипе вăл тунă предпарламента бойкот тума хушнă. Контрреволюцин çав вучахĕсен тĕллевĕсене Ленин ак çакăн пек хакланă: „...массăсене улталасси, рабочисене тата хресченсене улталасси, буржуазипе „коалици" тăвасси çине—çав кĕвĕскер, тĕрĕсленсе пăхнăскер, çурçаланса, сĕтĕрĕнсе пĕтнĕскер çине çĕнĕ тум тăхăнтарса пусмăрти классен куçпе сӳплесси..." (Соч., том. XXI, стр. 218).

Фашиссен ылханлă кайăшĕсем Каменĕв, Рыкăв парти речĕсене йĕркесĕр кăларма хăтланнă. Вĕсем, Ленин бойкот тăвассишĕн тăнине хирĕç пырса, предпарламента активлăн хутшăнма сĕнни. Çав предателсем мĕнле тĕллев тытнине Сталин йулташ çинчех туйса илнĕ. Вăл çав мерзавцăсен шухăшĕсене, пролетари революцине парăнтарасси патне илсе пыраканскерсене, уçса палăртса тарăхса сирсе пăрахнă.

Меньшевиксен тата ес-ерсен массă хушшинчи влийанийĕ иксĕлсе пыни буржуази планĕсене—империалисăмла вăрçа „çĕнтеричченех" малала тăсассине, революцийе пăвса пăрахассине пĕтĕмпех пĕтерсе хума пултарнă. Халăх массисен революцилĕ çĕкленĕвĕ хăрушă хум пек сарăлса пынине сиссе, контрреволюцилĕ буржуази хăй черечĕпе революцирен малала иртме васканă. Вăл революцийе çапма контрреволюцилĕ чăмăр, офицерсен, казаксен чаçĕсене, ударлă батальонсем хатĕрленĕ, çавăнпа пĕр вăхăтрах тылра революцилĕ массăсене тустарса пусарассине вăйлатнă. Корнилăвăн иккĕмĕш загăварне хатĕрленĕ. Анчах революци хатĕрленсе çитесси тăшмансен пур ĕçĕсенчен те мала иртсе кайнă.

1917 çулхи октаберĕн пуçламĕшĕ тĕлне çĕршыври класлă тапранусем тата татăклăнрах палăрса уçăмланса çитнĕ. Хирĕçлĕхсен чи йывăр çыххине тĕрĕс ăнланса илме, массăсене вĕсен çывăхри тĕллевне тĕрĕс кăтартса пама, палăртнă тĕллев патне çитмелли тĕрĕс çулйĕрсене уйăрса илме революцин аслă стратегĕн тата çулпуçĕн—Ленинăн ăсĕ кирлĕ пулнă.

Вăхăтлăх правителствă хĕсĕрленĕ пирки Ленинăн вăрттăн пурăнмала килнĕ. Вăл Финльандире пурăннă. Ун патне Сталин йултăшăн шанса йанă çыннисем пырса çӳренĕ, событисем мĕнле пулса пыни çинчен, партири лару-тăру çинчен, массăсен шухăш-кăмăлĕсем çинчен пĕлтерсе тăнă. Ленин хаçатсене тĕплĕн вуласа тăнă. Йаланхи пекех тата пур çĕрти те пекех, вăл событисене пурне те пĕлсе тăнă. Унăн сыхăлăхлă куçĕ, генилĕ витĕркурăмлăхĕ ниме те асăрхамасăр хăварман. Тăшмансен лагерĕнче вăйсем куçса пынине тата революци лагерĕнче вăйсем ӳссе пынине вăл тахçанах асăрханă.

(Малалли пулат).

Фашисла диктатăрсен тĕлпулувĕ

Фашисла Италин диктатăрĕ Муссолини çак иртнĕ кунсенче Германине пырса, Гитлерпа калаçнă.

Çавна май, Германин тата Италин фашисла пичечĕ икĕ çĕршывăн „тачă туслăхĕ“ тата „политикă йенпе пĕр пулса ĕçлесси“ çинчен çухрашма пуçларĕç.

Вăрçăпа тапăнакан фашиссем Испанире вăрçă вутне чĕртсе йачĕç тата пĕтĕм тĕнчери мирлĕ саманана хăрушлăх кӳрсе тăраççĕ. Иккĕленмели çук, Гитлерпа Муссолини калаçнă чухне вăрçăпа малала тапăнмали плансем палăртса хатĕрленĕ. „Большевисăмпа кĕрешес“ текен лозунгпа витĕнсе, вăрçăпа тапăнакан фашиссем, хăйсен усал ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртес тесе, пĕтĕм тĕнчере империалисăмла çĕнĕ вăрçă пуçарса йарассишĕн пур майсемпе те тăрăшаççĕ.

Хĕвеланăç Йевропăри капиталисла патшалăхсем, чи малтан Англи тата Франци сӳрĕк пулнипе, Германи тата Итали фашисăмĕ чăрсăрлансах пыраççĕ. Абиссинине туртса илнĕ хыççăн, Итали фашисăмĕ, Германи фашисăмĕпе пĕрле, Испани çине тапăнчĕ.

Испани правителстви пуçлăхĕ Негрин нумай пулмасҭ Лигă наци пленумĕнче—Итали Испанине халь унта йанă çартан (150—180 пин салтак) икĕ хут пысăкрах çар йама хатĕрленет, тесе каларĕ. Урăхçĕршывсенчи пичет пĕлтернĕ тăрăх, Гитлер тата Муссолини Испанире интервенцийе тата сарса пыма сăмах татнă.

Италин шыв айĕн çӳрекен киммисем Вăтаçĕр тинĕсре вăрă-хурахла тапăнусем тăваççĕ. Çавă та Муссолини урăхçĕршывсене тытса илес сарлака планне пурнăçа кĕртессишĕн çунни çинчен калаҭ. Нионри конференцире Итали фашисăмне отпор пани—миршĕн тăракан патшалăхсем пĕр пулса ĕçлесен вăрçăпа тапанакан фашиссене çăварлăхлама май килнине кăтартса пачĕ.

Урăхçĕршывсенчи пичет пĕлтернĕ тăрăх, Гитлер тата Муссолини Дунай бассейнĕ çинчен нумай калаçнă.

Германи те, Итали те Тĕпри тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Йевропăри (Дунай шывĕ тăрăхĕнчи) çĕршывсенче пуçпулса тăрасшăн. Нумай та пулмасҭ Германи тата Итали çав çĕршывсенче пуçпулассишĕн хытă хирĕçнĕ. Уйрăмăн илсен, Германи тахçантанпах Австрийе тытса илесшĕн. Нумай та пулмасҭ иртнĕ вăхăтра Итали çавна хирĕç тăнă. Анчах иккĕшĕ те пĕр тĕллев тытса (тĕнчене çĕнĕрен империалисăмла валеçесси), фашисла агрессăрсем пĕрпĕрне уступкăсем панă. Вĕсем ĕнтĕ Дунай бассейнĕнче тытса илес планĕсене пĕрпĕринпе килĕштерсе тăваççĕ. Тĕпри тата Кăнтăр-Хевелтухăç Йевропăри çĕршывсене Германипе Италин фашисла пĕрлĕшӳне кĕртме тăрашаççĕ. Йулашки вăхăтра фашисла Германи Австри çине пусарассине каллех вăйлатнă. Австри правителствине Гитлер хăйне кирлĕ пек тулти тата шалти политика тытса пыртарасшăн.

Фашисла патшалăхсем, чи малтан Германи, хăйсен хĕвеланăçри чиккисем хăрушсăрлăхра пулччĕр тесе, Англипе тата Франципе догăвăр тăвассишĕн тахçанах çунаççĕ. Вĕсем çавна туса миршĕн тăракан патшалăхсен пĕрлĕх фронтне çĕмĕрессшĕн, Тĕпри тата Кăнтăр-Хĕвелтухăçри Йевропăра пуçпулма, çавăн пекех тата Совет Союзĕ çине тапăнма хăйсен „аллисене ирĕклĕ“ тăвасшăн. Германи Лигă нацинчен тухнă, Итали Лигă наци ĕçне хутшăнмасҭ. „Хĕвеланăç пактне“ (килĕшӳ) туса Германи тата Итали хăйсен тылне советсене хирĕç вăрçăпа тухас вăхăт валли хатĕрлесшĕн.

Фашиссен икĕ диктатăрĕ тĕл пулса калаçни тĕнчери империалисăмла çĕнĕ вăрçă хăрушлăхĕ татах ӳснине пĕлтерет. Çав вăрçа фашисăм урса кайсах хатĕрлет. Пĕтĕм тĕнчери миршĕн тăракан демократилĕ патшалăхсем пĕр пулса, вăхăтра отпор пани, иртĕнсе кайнă фашиссем тĕнчери империалисăмла çĕнĕ вăрçа пуçлассине картласа, пӳлсе хума пултарат.

(ТАСС).

Парламĕнт ларувĕнче Испани правителстви тунă деклараци

ВАЛЕНСИ, октаберĕн 1-мĕш (ТАСС). Пайан кортессен (парламĕнт) пĕрремĕш ларувĕнче министрсен совечĕн председателĕ Негрин правителствăн деклараципе (заявленипе) вуласа панă, ăна хавасланса хĕрӳллĕн алă çупса кĕтсе илнĕ.

Негрин, правителствăн задачи вăрçа çĕнтерессипе çес ĕмар, тата ирĕклĕхе çирĕплетсе çитересси Испанине никама пăхăнмалла мар тăвасси те пулаҭ, тесе каланă. Испани хăйĕн ĕçне хутшăнма никама та ирĕк памасҭ, тенĕ Негрин. Испани çине тапăннисене сирсе йăма вăл ытти патшалăхсенчен пулăшу ыйтма тивĕçлĕ. Ĕç вăрçăла пăлхав çинчен мар, пĕтĕм тĕнчери саккунсем çине йĕрĕнсе пăхакан фашисла çĕршывсем хатĕрлесе пуçарнă чăн-чăн вăрçă çинчен пырат. Вăл патшалăхсем Йевропăра тата пĕтĕм тĕнчере пуç пуласшăн. Çав патшалăхсем пăлхавçăсене пулăшман пулсан, правителство пăлхава тахçанах пусарса пĕтернĕ пулĕччĕ.

Вăрçă çапăçу хирĕсенче çеç пулса пымасть. Çаванпа та правителства тылра йĕркене кĕртсе çитерме пĕтĕм вăйне хучĕ. Хăйсем тĕллĕн ĕçлесе пыракан пĕтĕм организацисене салатса йачĕ, пĕтĕм граждансен ирĕкне çирĕплетрĕ тата тылри йĕркене пăсма пăхнине пурне те тĕренех касса татма хатĕр. Негрин урăхçĕршыв посольствисенче пиншер фашис пытанса пуранине кăтартса панă.

Правителства халăх çарне малала та çирĕплетсе пырат. Вăл, Астурин паттăр боецĕсем умĕнче, вĕсене мĕнле тав тума сăмах та тупаймасҭ. Тăшман вăйлă пулнипе Бильбао тата Сантандер тăшман аллине куçни вăйлă çухату пулчĕ. Анчах Сеговийа, Мадрид сывăхĕнче тата Арагонире республиканцасем тăпăнни пысăк çитĕнӳпе иртрĕ. Çар кадăрĕ çитменнине тата хăватла вăйа хăвалатарт организацилессипе çăхăннă йавăрлăхсене тӳссе иртерет. Анчах та çар, пĕр иккĕленмесĕрех, темиçе уйăх хушшинче Республика пĕтĕм фронтсенчех тапăну тума пултармала вăйланса тата организацилесе пырат.

ССР Союзĕнчи Октябер революцийĕ çирĕм çул тултарнине уйавласа иртерме тунă пĕтĕм Испани комиссийĕ чĕнсе калани

ВАЛЕНСИ, октаберĕн 1-мĕш. (ТАСС) Асла Социалисăмла революци çирĕм çул тултарнине уйавласа иртерме тунă пĕтĕм Испани комиссийĕ Испанири пĕтĕм фашизма хирĕç кĕрешекенсене пăтне чĕнӳ йама илнĕ.

„Пĕтĕм тĕнче,—тенĕ чĕнсе каланинче,—ССР Союзĕ хăйĕн социализмне строителствипе çитĕнӳсемпе, пĕтĕм тĕнчери пурăн çирĕп хута кĕнишĕн хисеплесе пысăкăт. Пирĕн, Испани халăхĕн, Совет Союзĕ хăйĕн социализмне ... пысăк пулăшу панăшăн, вĕсене ытти халăхсем пек те мар, тусла пулнине кăтартма тата тав тума май пур.

Çавăнпа та пĕтĕм профсоюзла тата политикăлла организацисем, пĕтĕм фашизма хирĕç ушкăнсем, пĕтĕм çамрăк çершыв чăн представителĕсем Совет Союзĕн халăхне хăмăр туслăха, пуратăва тата хавасăлăха кăтартма пĕлтерешĕ.

„Пĕтĕм Испани комиссийĕ мĕн пур Испани сыннисене Асла Социалисăмла революци çирĕм çул тултарнине уйавласа иртересси активлă хутшăнма чĕнет.

Хаçат ĕçĕнчи йертсе пыракан вырăна

ХАРИКАВ, октаберĕн 2-мĕш (ТАСС). Йулашки вăхăтра Украинăри К(б) Партин Харикăв обкомĕ, облăçри, районсенчи партипе комсомол организацисем хаçат ĕçĕнчи йертсе пыракан вырăнсене тата редакци аппарачĕсене практикăлă ĕçре тĕрĕсленнĕ, активлă ĕçйалкорсене ĕçлеме илнĕ.

Харикăври велосипед савăтĕнчи рабкора Шапиро йулташа Алексейĕв районĕнчи совхоз хаçачĕн редактăрне лартнă. Çав савăтри рабкорах Мартыненко йулташа Чугуйĕв районĕнчи хаçат редактăрĕн заместителĕ тунă. Харикăври трактăр савăтĕнчи „Темп“ хаçат инструктăрĕ Неминовски йултăш Золочевск районĕнчи хаçат редактăрĕ пулса ĕçлет. Нумай тиражлă хаçат редактăрĕ пулса ĕçленĕ Федоренко йултăш халĕ Крупйанск районĕнчи куллен тухса тăракан хаçат редактăрĕ. „Серп и молот“ савăтĕнчи цехри хаçат редактăрĕсене Бельскипе Царенко йулташсене облăçри „Социалистическая Харьковщина“ хаçат редакци аппаратне илнĕ.

Украинăри К(б) Партин Харикăв обкомĕн бӳровĕ йышăннипе октаберĕн малтанхи çур уйăхĕнче хаçат ĕçне илнĕ ĕçйалкорсем валли облăçра икĕ уйăхлăх курс ĕçлеме тытăнаҭ. Чылай районра хаçат редакцисенче редакци работникĕсем тата ĕçйалкорсен активĕ валли шкулсем организациленеççĕ.

Китайри вăрçă ĕçĕсем.

Китай халăхĕн массисем хушшинче Йапони империалисăмĕн Китайри вăрăхурахла ĕçĕсене хирĕç хум вăйлăран та вăйлăрах çĕкленсе пыраҭ. Çĕршывра демонстрацисем пулса иртеççĕ, Йапони захватчикĕсемпе кĕрешес ĕç валли укçа пухаççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Çӳлте—Бейпинри студентсен демонстрацийĕ, айалта: учителницăсен демонстрацийĕ.

(Союзфото).

Китайри вăрçă

Шанхай фронтĕнче йулашки кунсенче пулса иртнĕ çапăçусенче пысăк улшăнусемех пулман.

Октаберĕн 1-мĕшĕнче çапăçусем Лодйанъ йалĕнчен пуçласа Чапей йалне çитиччен (Шанхайăн çурçĕр кварталĕсенчен пĕри) фронтăн пĕтĕм лини тăрăхĕнче пулса иртнĕ. Йапонцăсем татти-сыпписĕр артиллерирен пенĕ тата вăйлă атакăсем тунă пулин те фронтăн пĕр участкинче те çитĕнӳ тăвайман. Китай çарĕсем Лͅухань йалĕ патĕнчи çапăçура пĕр çамăл тупă, нумай винтовкăсем тата ытти çар хатĕрĕсем тытса илнĕ. Чапей районĕнче виççĕмĕш талăк ĕнтĕ урамсенче вăйлă çапăçусем пыраççĕ.

Октаберĕн пĕрремĕшĕнче Шанхайа улта пин Йапони салтакĕ пынă. Вĕсем Йапони çара çирĕплетес шутпа йулашки вăхăтра Шанхай районне куçарнă хĕрĕх пин çынран тăракан çарăн йулашки ушкăнĕ пулса тăраççĕ.

Китай пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, çентаберĕн 28-мĕшĕнче Шаньси провинцинче (Çурçĕр Китай) Китай çарĕсене пулăшма вăтăр Китай самолочĕ йанă. Çентаберĕн 30-мĕшĕнче самолотсем Шаньсин çурçĕр-хĕвелтухăç пайĕнчи Пинин—Куань йалĕсен районĕнче тăракан Йапони позицисем çине пĕрремĕш хут бомбăсем пăрахнă.

(ТАСС).

Германи хресченĕсен чухăн пурнăçĕ

ПРАГА, октаберĕн 1-мĕш (ТАСС). „Роте Фане“ коммунисла хаçат пайан фашисла Германинчи хресченсен йăвăр пурнăçне сăнласа паракан çырăва пичетлесе кăларнă. „Пирĕн округри (Кобленцă) хресченсем чи йăвăр нуша тӳсеççĕ. Иртнĕ вăхăтра нумай ачалă çемйесем хăйсен çемйи членĕсем Рейн облăçĕнчи промышленнăçлă районсене кайса ĕçлесе тупнă укçана перекетленипе пурăннă пулсан, халĕ вăл çынсем те йатак хисепне ӳстерсе йалтах лараççĕ. Хресченсен парăмĕ кунран кунах ӳссе пыраҭ. Вĕсем выльăхсем илсе сутакансен, вырăнти пуйан хуçасен, кулаксен тата сутуилӳ тăвакансен пусмăрĕнче пурăнаççĕ. Хресчен хăйĕн çимĕçĕсемшĕн виç-тăватă çул кайарахринчен 30 процент сахал илет. Хирсем тупăшсăрланаççĕ“,—тесе çырнă çырура.

Тепĕр „Дейче Фольксцейтунг“ хаçат Рейн облăçĕнчи хресченсем хушшинче фашисăма хирĕçле кăварлăх ӳссе пыни çинчен пĕлтерет. Пур йалсенче те нумай пулмасҭ пичетлесе кăларнă Рейн хресченĕсен—хресченсене фашисла аграрлă политикăна хирĕç кĕрешме чĕнекен листовкă—çырӳне чылай сарнă.

Атăл лешйенчи уйар çанталăкпа типсе кайакан уйхире пĕр мĕлйун гектар шăвараççĕ

КУЙБЫШĔВ, октаберĕн 2-мĕш (ТАСС): Куйбышĕв гидроузелĕн питĕ пысăк строителстви уйар çанталăкпа типсе кайакан Атăл лешйенне анлăн шăварас ĕçе татса параҭ. Ку тариччен унта пĕчĕкрех вырăнсене çеç шăварнă. Гидроузела туса çитерсен Атăл шывĕпе пысăк уйхирсене—пĕр мĕлйун гектар площĕд çинче шăвараççĕ.

„Нижневолгопройектăн“ Куйбышĕври уйрăмĕ вăйлă шăвармали системăн строителствине хатĕрленессипе шырав тата пройект тăвас ĕçсене тытăннă. Ку гидроузел пулсан Куйбышĕв облăçĕн уйхирĕсене 400 пин гектар площĕд çинче шăвараççĕ.

Çамрăксем Хĕрлĕ çара кайаççĕ

ЙĔПРЕÇ. Призыв çентаберĕн 24-мĕшĕнче пуçланчĕ.

Призывниксем, Хĕрлĕ çарăн пулас боецĕсем, призыв комиççине музыкăсемпе, хĕрлĕ йалавсемпе колоннăн-колоннăн пыраççĕ. „Спартак“ общĕствин Йĕпресри кооплеспром аласталăх ертелĕ çумĕнчи физкультура организацинчи призывниксем комиççине пысăк хавасăлăхпа тата лайăх хатĕрленнипе пычĕç. Физкультурниксем пурте хĕрлĕ çара кайма йурăхлă пулчĕç. Вĕсем пурте ГТО, ГСО, ПВХО, Ворошилăв пек тĕл перекенсен значокне илнĕ.

Н. Клементйĕв, И. Павлов, В. Иванов, В. Йегорăв йулташсем уйрăммăнах палла вырăнта тăраççĕ. Клементйĕв колхозсен спартакиадинче чупассипе мала тухнă. Павлов велосипедпа 50 километр чупса, республикăре пĕрремĕш вырăна тухнă. Йегорăв преми илнĕ. Вĕсемпе республикăри чупу маçтарĕ, физкультура коллективĕн руководителĕ Петров йултăш тăрăшса ĕçленĕ. Вăл физкультура коллективĕн членĕсем Хĕрлĕ çара йурăхлă пулнăшăн савăнаҭ.

Хĕрлĕ çара кайакансем хушшинче стахановцăсемпе ударниксем нумай шутланаççĕ. Акă мăрат колхоз членĕ Петр Чубуков йултăш колхозра паллă стахановцăсем шутĕнче тăраҭ. Унăн çемйи кăçал 850 ĕçкунĕ тунă. Униăн вĕсем 450 пăт таса тĕштырă илеççĕ. Çак колхоз членех трактăрис Г. Немцĕв йултăш хăйĕн нормине 150 процент тултарса пынă. Вăл 120—130 пăт тырă тата 2000 тенкĕ ытла укçан илет. Немцĕв хăйне Хĕрлĕ çара илнишĕн савăнаҭ.

— Епĕ Хĕрлĕ çар ĕретне кайма йурăхлă пулнишĕн савăнатăп. Хĕрлĕ çарта танкис пулатăп,—тет.

„Правда“ колхоз членĕ Прокопйĕв Николай та хăйне Хĕрлĕ çара илнипе хавасланаҭ. Прокопйăвăн пиччĕшĕ Инçетри Хĕвел Тухăçĕнче Совет Союзĕн чиккисене сыхлаҭ. Прокопйĕв та пиччĕшĕнчен йулмасҭ. Вăл та Инçет Хĕвелтухăçĕне совет чиккисене сыхлама кайаҭ. Вăл Сталинла Конституцин 132-мĕш статйине йаланах асра тытаҭ.

Дм. Михайлăв.

400 процент

ÇĔМĔРЛЕ („Чăваш Коммунĕ“ корр.). С. П. Петров йачĕпе тăракан комбинатри столярнăй цехра лентăлă пăчăкăлă станок çинче ĕçлекен Вавилăв стахановцă кашни кулленех ĕç тухăçлăхне хăпартса пыраҭ. Çентаберĕн 25-мĕшĕнче сĕтелĕн капитĕльне тата шкаф кăшкарне йакатас ĕçĕн пĕр кунхи нормине 300 процент тултарчĕ. 26-мĕшĕнче вăл татах та лайăх ĕçлерĕ.

Йулашки почтăран

Телефон тăрăх...

Шăхасан районĕнчи „Вăйлă тырпулшăн“ хаçат йалсоветсен, секцисен тата уйрăм депутатсен ĕçĕсем çинчен çырма манса кайнăччĕ.

Çентаберĕн 23-мĕшĕнче „Вăйлă тырпулшăн“ хаçат сасартăк ыйăхран вăранаҭ те, районти йалсовечĕсене цурне те пĕр рете лартса тухса, тăпăлтарма тытăнаҭ. Вăл „йалсовет секцисен ĕçĕсем“ çинчен пысăк статйа пичетлет. Унта вăл нимĕн вăтанмасăр районти пур йалсовечĕсене тата Совет депутачĕсене „Совет Союзĕн Сталинла Конституцине ăнланман“ тесе айăпласа хураҭ. Хаçат çав статйара пĕр секцин ĕçне лайăххăн кăтартман, пĕр секцин начар ĕçне туйса илмеле критиклемен. Советсем çинчен пĕтĕмĕшле сăмах пуçласа, райĕçтăвкомăн çĕр ĕç пайĕн, сывлăха сыхлав пайĕн, сулйĕр пайĕн, çӳтĕç пайĕн пуçлăхĕсене асăнса тухаҭ. Анчах райĕçтăвком тата унăн пайĕсем йалсоветсене массăлă ĕçе йĕркелеме мĕнле пулăшнине уççăн критиклемест. Çав вăхăтрах хаçат районти йалсовечĕсемпе секцисене пурне те „вĕсем нимĕн те тумаççĕ“ тесе халăх суйланă депутатсен йатне варалама хăтланаҭ. Районти организацисен тумали ĕççене йалсовечĕсемпе секцисем çине йăвантармала канаш параҭ хаçат. Ку тĕрĕс мар, йăнăш.

Çак помĕртех хаçат лайăх ĕçлекен йалсоветсене кăтартам пекки тунă. „Вăйлă тырпулшăн“ хаçат лайăх ĕçлекен йалсовечĕсене мĕнле шырани çинчен калама хăйнех сăмах парăпăр. Акă хаçат мĕнле калаçаҭ:

„Час-часах телефон тăрăх ыйтатăн:

— Уйкас Кипек! Кам калаçаҭ?

— Дежурнăй,—тет сана хирĕç.

— Мĕн йатлă есĕ дежурнăй? тетĕн те сасă çавăнтах таçта кайса çухалаҭ“.

Редакци çапла, телефон тăрăх лайăх ĕçлекен йалсовечĕ шыранă. Телефон тăрăх шанкăртатарсан, редакци сотрудникĕ Анат Вăрманйал йалсоветне çитнĕ. Йала çитсенех ăна йалсовечĕн тĕлĕнмеле лайăх ĕçĕ пуçне çавăрса йанă. Хаçат çырнă тăрăх йалсовечĕн лайăх ĕçĕ акă мĕнре: „Йалсовет канцелярийĕнче дежурнăйсем хăйсен черечĕсене йĕркелĕ тăрса ирттереççĕ. Ансăртран дежурнăй çук чухне йалсовет председателĕ Йакăвлĕв йултăш хăй пулаҭ. Вăл çĕрле те йалсовет канцелярийĕнчех сываҭ“. Хаçат Йакăвлĕвран пур йалсоветсене те пример илме хушаҭ.

Хаçат йалсовечĕн лайăх ĕçне дежурнăйсем йĕркелĕ тăнинче çеç курни тĕрĕс мар. Халĕ йалсовечĕсен, секцисен тĕп ĕçĕ вăл—колхозниксемпе ĕçсыннисене Сталинла Конституцине тата суйлав саккунне ăнлантарса парасси пулаҭ. Хăйсен те суйлава лайăх хатĕрленмеле, суйлавçăсене те лайăх хатĕрлемеле. Çакăн пекех хаçатăн йалсоветсен, секцисен, уйрăм депутатсен ĕçĕсене çутатнă чухне мĕн пуçа килнĕ, çавăн çинчен мар, кашни йалсовечĕн, секцин, депутатăн ĕçне тĕплĕн пĕлсе, тĕп ыйтăва илсе çутатмала. Советсемпе вĕсен депутачĕсем революцилĕ сыхă тăрса тăшмансемпе мĕнле кĕрешнине, хăйсен кĕрешӳри пултарулăхне мĕнле ӳстернине кăтартмала.

Тĕрĕсленĕ заметкăсем

„Тăшмансене колхозран тасатмала“

Шальчакассинчи (Трак р.) Ворошилăв йачĕпе тăракан колхозра Леонтйĕв Антон колхоз председателне кĕрсе вырнаçнă. Вăл колхоза кĕрсенех колхоз хуçалăхне арпаштарма тытăнаҭ. Акă мĕн хăтланаҭ вăл. Афанасйĕвсемпе сыхăнса кайса кунĕн-çĕрĕн ĕçсе çӳренипе колхоз çинчен тĕрлĕрен кирлĕ мар усал сăмахсем сарса 5—6 киле илĕртсе колхозран кăларнă. Кăçал çак Леонтйĕв колхоз председателне кĕрсен татах колхозниксене килĕшмеле мар сăмахсем каласа çӳрет.

Леонтйĕв сахал мар колхозра тăшманла ĕç тунă. Колхозăн çуракинче вăрлăх çитеймен. Çапла вара Леонтйĕв колхозниксемпе хирĕçсех 0,32 гектар çине кĕрхи тулă актараҭ. Халĕ çакă тулă шăтман та.

Леонтйĕвпа колхоз завхозĕ 100 пăт çĕрулмине хăйсен килне шутарнă. Николайĕв колхозникăн хăйĕн кил вырăнне лартма çĕр улми çитмен. Çавна Леонтйĕв лартса усă курнă. Колхозниксем 5 гектар вăрман кăкласа çĕр тунă, анчах Леонтйĕв вăрлăх çук тесе актарман. Вăл колхоз председателĕнче ĕçлеме пуçланăранпа ĕçе йурăхлă 40 лашаран 4 çеç ывăнмасăр йулнă. Патшалăхран 10 центнĕр тырă лашасене тăрантарма панине йурийех памасăр тăнă. Колхозниксем вăрман хатĕрленĕнче ĕçленĕ вăхăтра 37 кило çăкăр илмеле пулнă, ăна Леонтйĕв хăйне валли илсе колхозниксене çăкăрсăр хăварнă, фермăри сыснасене начар пăхнипе 5 сысна вилнĕ. Кунти ĕитменлĕхсем çинчен пухусенче тухса калакансене колхозран кăларассипе хăратнă. Унăн ирсĕр тăшманла ĕçĕсем çинчен сăмах тапратмали те çук. Леонтйĕвăн тăшманла ĕçĕсем çинчен каласа та пĕтерес çук, тесе çыраҭ Йегорăв йалкор.

„Чăваш Коммунĕ“ хаçат редакцийĕ ку заметкăна Чăваш республĕкĕнчи прокурор патне тĕрĕслеме йанăччĕ. Заметкă тăрăх вырăна тухса тĕрĕсленĕ хыççăн, кăтартнă фактăсем тĕрĕс пулчĕç. Леонтйĕва уголовнăй кодексăн 109-мĕш тата 87-мĕш статйипе айăплас ĕçе пуçарнă. Ĕçе йĕрлесе пĕтерсен, суд аллине паратпăр, тесе пĕлтерчĕ республикă прокурорĕн помошникĕ Кузмин йултăш.

ХРОНИКĂ

ССР Союзĕн правителстви тăрăшнипе, Пĕтĕм тĕнчери Хĕрлĕ Хĕрес комитечĕ пулăшнипе „Комсомол“ тата „Смидович“ совет теплоходĕсен командă членĕсен ушкăнĕсене октаберĕн пĕрремĕшĕнче ирĕке кăларса Франци çĕрĕ çине илсе пынă.

Пĕтĕм тĕнчери Хĕрлĕ Хĕрес ушкăнĕ пĕлтернĕ тăрăх, çитес кунсенчех „Комсомол“ тата „Смидович“ теплоходсен командисенчи ытти членĕсене те ирĕке кăлараççĕ.

(ТАСС).

Ответлă редактăр заместителĕ И. П. ПАВЛОВ—ПИНЕР

Чăвашдревăн хăма çуракан савăчĕсем

Хăма çурса пама заказ параканĕн йăвăçĕпе

ЗАКАЗ ЙЫШĂНАÇÇĔ

Пĕр кубометр йăвăçа çурнăшăн савăт условийĕсене шута илсе 10 тенкĕрен пуçласа 15 тенкĕ таран илеççĕ.

3—0 ЧĂВАШДРЕВ.

Чăваш Совет писателĕсен Союзĕн

уйăхра пĕрре тухса тăракан илемлĕ литературă, критикă, искусствă журналĕ

„СУНТАЛ“

(14-мĕш çул тухаҭ)

1937-мĕш çулхи июль уйăхĕнчен пуçласа „Сунтал“ журнал Чăвашсен Патшалăх Издателствинчен Чăваш совет писателĕсен Союзĕ аллине куçрĕ. Малашне, „Илемлĕ литературă“ журнал тухма пăрахнă пирки, чăваш совет писателĕсемпе поечĕсем, драматургĕсем çырнă чи паха художĕствăлă произведенисем пурте „Сунтал“ журналра пичетленсе пыраççĕ.

„СУНТАЛ“ малашне вăхăтра тухса тăма пуçлаҭ.

„СУНТАЛ“ журнала писмоносцăсем тата почтă агĕнтсвисем урлă, почтă уйрăмĕсенче тата Шупашкарти „Союзпичет“ урлă

çырăнса илме пулаҭ.

Журнал хакĕ:

Çулталăка—12 тенкĕ
6 уйăха — 6 тенкĕ
3 уйăха — 3 тенкĕ
Уйрăм номĕрĕн хакĕ 1 тенкĕ.

Редакци адресĕ: г. Чебоксары, Дом Печати, ред. журнала „Сунтал“

3—0

„Чăваш Коммунĕ“ çырăнса илмели хаксем: 12 уйăха—30 т., 6 уйăха—15 т., 3 уйăха—7 т. 50 пус, 1 уйăха—2 т. 50 пус. Алçырăвĕсене кайала памаççĕ.

Уполномоченный Чувашглавлита № 721. Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашгиз. Заказ № 1923. Тираж 11564. ф. 58—92 см. 1—1 п. л.

7